Чебоксарская
Ц. Б. им. Горького

Пĕр №-рĕ 10 пус 19-мĕш çул тухать

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 октябĕр 26 ЫТЛАРИКУН 246 (4758)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Совет Сойузĕнчи нумай мĕлйунлă ĕççыннисем социалисăм çĕнтерĕвĕсене организацилекенпе йертсе пыракан Сталин йулташа тата унăн чи çывăх та шанчăклă соратникĕсене ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕсем пулма кандидата тăратаççĕ

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ—Сойуз Совечĕн депутатне суйламалли пĕрремĕш кандидат

Совет Сойузĕнче суйлав кампанийĕ пĕрмайах сарăлса пырать. Пур çĕрте те ĕççыннисен суйлав умĕнхи пухувĕсем пит çĕкленӳлĕ иртеççĕ. Вăл пухусем Сталинла Тĕп Комитетпа Совет правительстви тавра пĕтĕçнĕ рабочисен, хресченсен, служăщчисен, интеллигенцин пĕрлĕх демонстрацийĕ пулса тăраççĕ.

Сойуз Совечĕн депутатне суйлама пĕрремĕш кандидата пур çĕрте те тĕнчери чи демократилĕ Конституци тăвакана, халăхсен аслă çулпуçне, Сталин йулташа калаççĕ.

Сойуз Советне суйлама Сталин йулташ кандидатурине Октябĕрĕн 23-мĕшĕнче çак пухусенче тăратнă: Мускавра Сталин йачĕпе тăракан уйрăм Хĕрлĕ Йалавлă Ленин орденлă кавалери дивизин бойецсемпе командирсенчен тата политработниксенчен, „Красный пролетарий" заводри тата Владимир Илйич йачĕпе тăракан заводри рабочисемпе служăщчисенчен: Кийевра—Хĕрлĕ йалавлă заводри, химилĕ машинă тăвакан „Большевик" заводри, кимĕсем тăвакан „Ленинская кузница" заводри тата Дарницкри аш-какай комбинатри рабочисемпе служăщчисенчен; Архангелдск облăçĕнче—Ленин йачĕпе тăракан хăма çуракан заводри, кимĕсем тăвакан завод строителствинчи рабочисемпе служăщчисенчен тата Çурçĕрти чукунçул депо рабочисенчен; Днепропетровскра—Ленин йачĕпе тăракан трубопрокат заводри рабочисемпе служăчисенчен; Дон-çи Роставра — Сталин йачĕпе тăракан йалхуçалăх машинисем тăвакан заводри рабочисемпе служăщчисенчен; Арменире—синтетически каучук комбинат строителствинчи рабочисемпе служăщчисенчен; Ивановра меланжево комбинатĕнчи рабочисемпе служăщчисенчен.

Пĕтĕм ĕççыннисене çавăрса илнĕ хаваслăх çинчен Харьковри трактор завод коллективĕн резолюцийĕ лайăх каласа парать:

„Кашни ĕççыннишĕн, хăйĕн сасне пире савăнăçлă та телейлĕ пурнăç параканшăн, пире çĕнтерӳсенчен çĕнтерӳсем патне илсе пыраканшăн панă пек савăнăç урăх çук!", тенĕ вăл резолюцире.

Суйлав умĕнхи пухусем пысăк çĕкленӳпе Сойуз Совечĕн депутатне суйлама ĕçре пиçнĕ болшевиксене, Сталин йулташăн чи çывăх соратникĕсене—Молотов, Каганович, Ворошилов, Калинин, Андрейев, Микойан, Чубарь, Жданов тата Йежов йулташсен кандидатурисене тăратаççĕ.

Сойуз Советне суйлама Молотов йулташ кандидатурине октябĕрĕн 23-мĕшĕнче Мускаври Менжински йачĕпе тăракан Хĕрлĕ йалавлă заводри ĕççыннисен суйлав умĕнхи пухувĕнче, çавнашкалах „Азовсталь" (Мариуполь), Кийеври Сталин йачĕпе тăракан кимĕсем йусакан заводри, Канакир гидроцентраль строителствинчи, Горькири Молотов йачĕпе тăракан автозаводри, Архангелдскри Молотов йачĕпе тăракан заводри, Воронежри „Електросидиал" заводри рабочисемпе служăщчисенчен тăратнă.

Мускаври пурçăн комбинатĕнчи („Красная роза"), Ворошиловградри паравоз тăвакан заводри, Ереванри Степанян йачĕпе тăракан çĕвĕ фабрикĕнчи, Раменскри (Мускав облăçĕ) 18 №-лĕ стройтрестри рабочисемпе служăщчисем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Ворошилов йулташ кандидатурине тăратнă.

Лихобор—Мускав станцинчи паравоз деповĕнчи, Мускаври „СВАРЗ" заводри, Кийеври паравоз йусакан заводри рабочисемпе служăщчисем, Ленинаканри чукунçул çинче ĕçлекен рабочисем тата Ереван хулинчи трамвай çинче ĕçлекенсем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Л. М. Каганович йулташ кандидатурине тăратнă.

Сойуз Совечĕн депутатне суйлама М. И. Калинин йулташ кандидатурине Мускаври Калинин йачĕпе тăракан фабрикăри рабочисенчен, Ленинградри Калинин йачĕпе тăракан Совет строителстви институчĕн студенчĕсенчен, профессăрсенчен, рабочисенчен тата служăщчисенчен тăратнă.

Ленинградри „Красный треугольник" заводри тата Мускаври „Труд" çĕвĕ çĕлекен фабрикри рабочисемпе служăщчисенчен—Жданов йулташа тăратнă.

Кийеври Сталин йачĕпе тăракан електростанцинчи рабочисемпе служăщчисенчен, Ереванри чукунçул çинче ĕçлекенсенчен, Ленинградри „Рот Фронт" фабрикĕнчи рабочисемпе служăщчисенчен, Мускаври пĕрремĕш кăтартулă типографипе Мускаври „Красный пролетарий" кĕнеке фабрикĕн коллективĕсенчен, Краснодарти „Агроном" совхозĕнчи рабочисемпе служăщчисенчен—Йежов йулташа тăратнă.

Октябĕрĕн 23-мĕшпе 24-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлав умĕнхи пухусенче Сойуз Совечĕн депутатне суйлама çавнашкалах Украинăри К(б) Парти Тĕп Комитечĕн секретарне Коссиор йулташа, ПСК(б) Парти Мускав Комитечĕн секретарне Хрушчов йулташа, „Правда" редакци коллеги членне Мехлис йулташа, Совет Сойузĕн маршалне Буденный йулташа, Йутçĕршыв ĕçĕсен халăх комиссарне Литвинов йулташа, УССР Ĕçтăвакан Тĕп Комитет председателне Петровский йулташа, РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателне Булганин йулташа, Совет Сойузĕн маршалне Блюхер йулташа, ССР Сойузĕн Халăх артисне Москвин йулташа, Метрострой стахановкине Федорова йулташа, паравоз машинисĕ пулнă, Мускав облăçĕнчи Коломенри машинăсем тăвакан завод инженерне Малышев йулташа, Кийеври „Укркабел" завод работницине Гуçатникова йулташа, Харьковри трактăр завочĕн чи лайăх стахановцине Колесник йулташа, Совет Сойузĕн Геройне Чкалов йулташа, УССР-ти Ăслăлăхсен Академин президентне Богомолец йулташа кандидатурăна тăратнă.

„СВАРЗ" завочĕн коллективĕ Лазарь Моисейевич Каганович кандидатурине тăратнă

Мускаври Каганович йачĕпе тăракан вагонсем ремонтлакан тата тăвакан Сокольникри заводăн (СВАРЗ) пин те çичçĕр работникĕсем Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма хăйсен кандидатне тăратма пухува килнĕ.

Микрофон патне електричĕствă цехĕнчи партире тăман ватă работницă—стахановкă Мокейева йулташ пырать. Вăл хĕрӳлĕ сăмах калать:

— Пирĕн çине хамăр тăван çĕршывăн çӳлти органĕн депутачĕ пулма кандидат тăратас пысăк чыс ӳкрĕ. Çирĕм çул кайарах епĕ çакăн пек пысăк чыс çинчен шухăшлама пултарнă-ши? Аса илĕр-ха, йулташсем, патша саманине. Пусмăрлăх, нушалăх, правасăрлăх. Сирĕнпе пире, уйрăмăнах хĕрарăмсене çын вырăнне те хуман. Çав ылханлă вăхăтра халап та хывнă: „чăх-кайăк мар, хĕрарăм—çын мар". Пире, хĕрарăмсене вальли çул пулман. А халĕ Совет влаçĕ вăхăтĕнче епĕ çырма-вулама вĕрентĕм. Епĕ аслă çĕршывăн тулли правалă гражданки. Ăна мана тата пире пурне те хамăрăн тăван совет влаçĕ, хамăрăн парти, хамăрăн çулпуç панă. Хамăрăн çитĕнӳсемпе епĕр хамăрăн тăван Сталин йулташа тата унăн чи лайăх соратникне—Лазарь Моисейевич Кагановича тивĕçлĕ. Пирĕн завод камăн йатне мăнкăмăллăхпа йышăнса тăрать, çавăн кандидатурине—Каганович йулташăн кандидатурине епĕ депутат пулма тăрататăп.

Çак сăмахсем çине хаваслăн „урра" кăшкăрнипе ответленĕ.

Трубинă çинче механически цехри стхановец Казарновский.

— Епĕр, совет çĕршывĕн çамрăкĕсем, çутă тулли пурнăçпа пурăнатпăр. Çак пурнăçа пире болшевиксен аслă партийĕ туса панă, çав пурнăçшăн Ленин кĕрешнĕ тата, хăйĕн сывлăхне шеллемесĕр, пирĕн аслă çулпуç Сталин йулташ кĕрешет. Çак пурнăçшăн питĕ те паха организатăр, Сталин йулташăн тĕрĕс соратникĕ Лазарь Моисейевич Каганович та кĕрешет. Пур çĕрте те—Партин Мускав Комитетĕнче, транспăрт çинче, метро строителствинче, йавăр промышлĕннăçа йертсе пырас ĕçре,—пире пурсăмăрта та Лазарь Моисейевич Каганович ĕç çине социалисăмла пăхассин образецĕсене кăтартать, хăйĕн примерĕпе вăл пире йавăрлăхсемпе болшевикла кĕрешме, пахаран та паха çĕнĕ çĕнтерӳсем тума хавхалантарса, çулăмлантарса пырать.

Каганович йулташ пирĕн чукунçул çинчи суйлав округĕнче баллотировкăра тăма килĕшсен, епĕр телейлĕ те савăнăçлă пулатпăр.

Суханов, Морозов т. ыт. стахановецсем хăйсен сăмахĕсенче Каганович йулташ социалисăмла строителствăн пур йавăр участкисенче те, ăна парти йанă вырăнсенче, мĕнле парăнса тата вăйа хурса ĕçлессин образецсене кăтартса пыни çинчен каларĕç. Епĕр аслă Сталинăн чи лайăх вĕренекенĕшĕн тата соратникĕшĕн пысăк савăнăçпа сасăлатпăр тесе вĕсем мăнкăмăллăн каланă.

Заводри коммунисла тата комсомол организацисен йачĕпе Токаревпа Морозов йулташсем партире тăман рабочисен сĕнӳне хĕрӳлĕн хута кĕнĕ.

Пуху çакăн пек резолюци йышăннă:

„Лазарь Моисейевича епĕр вăл ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекен, борец, революционер, пĕтĕм тĕнчери чи лайăх метро строителĕ, социалисăмла транспортăн пахаран та паха çитĕнĕвĕсен организатăрĕ пулнипе пĕлетпĕр. Парти ăна, революцин тĕрĕсленнĕ салтакне, аслă Сталинăн чи лайăх вĕренекенне, социалисăм фрончĕн чи йавăр участкисене йарать. Унăн никам аркатайми борец вăйне парти шанса тăрать, нумай мĕлйунлă совет халăхĕ шанса тăрать. Пирĕн коллектив Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма унăн кандидатурине савăнăçлăн тăратать".

„СВАРЗ" коллективĕ çак решенине пысăк хаваслăхпа йышăннă.

Пуху чукунçул çинчи суйлав округĕн суйлав умĕнхи канашлăвĕнче пулма 12 представителĕ суйласа хăварнă.

Ленинградра

ЛЕНИНГРАД, октябĕрĕн 24-мĕш. „Красный треугольник" заводри рабочисемпе работницăсен, инженерсемпе служащчисен 12 пин çын пуçтарăннă пухувĕнче работницă-галошницă Дарйа Ивановна Лыткина хĕрӳлĕ сăмах тухса каланă.

— Манăн çине пысăк телей килсе тухрĕ,—тесе калать вăл хумханулăн,—епĕ хамăр пухура чи малтан Аслă Совечĕн депутатне суйлама кандидат тăрататăп. Сойуз Советне депутата суйлама кам кандидатурине тăратма пултаратпăр-ха епĕр? Социалисăмлă государствăн аслă органне епĕр суйласа йаракан çыншăн тăван çĕршыв интересĕсем тата ĕççыннисен телейлĕхĕ нимрен те хакли пулмала.

Çавăн пек пирĕн шанчăка тивĕçлĕ çын вăл—Ленинград болшевикĕсен руководителĕ, Ленин—Сталин партин шанчăклă ывăлĕ, аслă Сталинăн тусĕ—Андрей Александрович Жданов пулса тăрать.

Çак сăмахсене пуху чылайччен вăйлăн алă çупса ответлет. Ватă работницă калама çук пысăк коллективăн шухăшĕсене палăртса пачĕ.

Лыткина хыççăн заводри ытти рабочисемпе работницăсем тата инженерсем те тухса калаççĕ. Пурте вĕсем унăн сĕнӳне хĕрӳлĕн хапăл тăваççĕ.

Пуху пĕр сасăпах резолюци йышăннă, вăл резолюцире завод коллективĕ Сойуз Совечĕн депутатне суйлама хăйсенчен Жданов йулташ кандидатурине тăратса, унран Ленинградăн Киров Суйлав Округĕнче баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать.

Çавăн пекех ĕнер суйлав умĕнхи пухусем Смольнăй Суйлав Округĕнчи чылай предприйатисенче пулса иртнĕ. „Красный инструментальщик" заводри рабочисем Национальнăçсен Совечĕн депутатне суйлама Ленинград хула совечĕн председателĕн Петровский йулташăн кандидатурине тăратнă.

„Рот фронт" йатлă паха тир фабрикĕн 4 пин çынлă коллективĕ Смольнăй Суйлав Округĕнчен Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Шалти ĕçсен Сталинла Наркомĕн—Николай Иванович Йежовăн кандидатурине тăратнă.

Бебел йачĕпе тăракан тир-сăранпа галантерейа фабрикĕн икĕ пин çынлă коллективĕ Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Совет Сойуз Геройĕн Чкалов йулташăн кандидатурине, иккĕмĕш електростанцинчи рабочисемпе служащчисем—Совет Сойузĕн маршалĕн С. М. Буденный йулташăн кандидатурине тăратнă.

Красногвардейски суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлу

ЛЕНИНГРАД, 23-Х. (ТАСС). Выборски тата Красногвардейски районĕсенчи предприйатисемпе организацисен икĕ пин представителĕсем Красногвардейски суйлав округĕн суйлав умĕнхи канашлуне пухăннă.

Сталин йачĕпе тăракан заводри слесăр Богданов (партире тăмасть) çав заводри рабочисен пĕрлехи пухувĕ Сойуз Совечĕн депутатне суйлама пĕтĕм Сойузри старăстăн—Михаил Иванович Калининăн кандидатурине тăратма йышăнни тесе пĕлтернине канашлу тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

— Заводри пĕрлехи пуху, — тенĕ Богданов, — пирĕн делегацине канашлура тухса каласа хамăр сĕннĕ Михаил Иванович кандидатурине хута кĕме хушрĕ. Пирĕн рабочисемпе хресченсен президенчĕ ĕлĕкрех Выборгски сторонара ĕçлесе пурăннă. Вăл хăйне пĕтĕмпех рабочи класăн диктатуришĕн, коммунисăмшăн кĕрешес ĕçе панă, йаланах Ленинпа Сталинăн тĕрĕс соратникĕ пулнă. Михаил Иванович йачĕпе социалисăмла Аслă революцин мĕн пур çĕнтĕрĕвĕсем, пирĕн çĕршыв 20 çул хушшинче тунă мĕн пур çитĕнӳсем тача çыхăнса тăраççĕ. Сталин йачĕпе тăракан заводри суйлавçăсен коллективĕн йачĕпе епĕ çак мухтавлă кандидатурăна хута кĕме чĕнетĕп.

Орденоносец полковник Прохоров йулташ çапла каланă:

— Буржуалă государствăсем çар представителĕсене суйлас тата суйланас правасăр хăвараççĕ. Хĕрлĕ çар — рабочисемпе хресченсен çарĕ. Совет Сойузĕнче Хĕрлĕ çар боецне советсен çĕршывĕн ытти мĕн пур суйлавçисем пекех, сасăлас тата суйланас аслă правана панă. Епĕ, Хĕрлĕ çар представителĕ, савăнăçлăн калатăп: рабочи-выборжецсем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Ленинпа Сталинăн чи тĕрĕс соратникĕсенчен пĕрин—Михаил Иванович Калининăн кандидатурине тăратса лайăх тунă. Хĕрлĕ çарăн артиллери академийĕнчи пĕрлехи пуху, епĕ унăн представителĕ пулатăп, пирĕн суйлав округĕн мĕн пур боецĕсем пĕтĕм Сойузри старăстăшăн — М. И. Калининшăн пĕр кăмăллăн та савăнăçлăн сасăлĕç.

Красногвардейски суйлав округĕнчи ытти предприйатисен представителĕсем те канашлура тухса каланă чух М. И. Калинин кандидатурине Сойуз Совечĕн депутатне суйлама тăратнине хĕрӳлĕн хута кĕнĕ.

Округри суйлав умĕнхи канашлу резолюци йышăннă, вăл резолюцире Красногвардейски суйлав округĕн мĕн пур суйлавçисене Питĕрти ватă токарĕн, Пĕтĕм Сойузри старăстăн — Михаил Иванович Калининăн кандидатуришĕн пĕр кăмăллăн сасăлама чĕннĕ.

Округри канашлу Калинин йулташран Ленинградри Красногвардейски суйлав округĕ тăрăх Сойуз Совечĕн депутатне суйланма баллотировкăра пулма хăйĕн килĕшӳне пама ыйтать.

Володарски суйлав округĕн суйлав умĕнхи канашлăвĕ

ЛЕНИНГРАД, 23-Х. (ТАСС). Володарски културă çуртĕнче Ленинградри Володарски суйлав округĕнчи предприйатисемпе общĕствăлă организацисен представителĕсен суйлав умĕнхи канашлăвĕ пулса иртнĕ. Културă çурчĕн пысăк залĕ фабрик-заводсенчи стахановецсемпе, ударниксемпе тата ăслăлăх-тĕпчев учреждениĕсен работникĕсемпе тулса ларнă.

„Большевик" завочĕн ĕççыннисен йачĕпе тухса каланă партире тăман рабочи, ватă производственник Андрейев тата „Рабочий" пиравăр тĕртекен комбинатри ĕççыннисен йачĕпе каланă стахановкă Йелсакова йулташсем Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Андрей Александрович Жданов кандитатурине тăратнă.

— Жданов йулташ пулăшнипе, вăл йертсе пынипе епĕр мĕн пур фашисла тасамарлăха аркатса тăкрăмăр, татах та аркатса пырăпăр, троцкисла-зиновйевла тата бухаринла бандитсене пĕр шеллемесĕр çĕмĕрсе тăкăпăр, — тенĕ Йелсакова йулташ.

Канашлу пĕрсаслăн йышăннă резолюцире çапла каланă:

„Епĕр хамăрăн суйлав округĕнчи тăватă заводри: „Большевик", Ворошилов йачĕпе тăракан, Пролетарскри паравозсем ремонтлакан тата пиравăр тĕртекен „Рабочий" комбинатри пухусенче Сойуз Совечĕн депутатне суйлама Жданов йулташ кандидатурине тăратнине пĕр кăмăллăн хута кĕретпĕр. Епĕр Жданов йулташран Володарски суйлав округĕнче Сойуз Совечĕн депутатне суйланма баллотировкăра пулма килĕшӳ пама ыйтатпăр".

Канашлу суйлав округĕнчи ĕççыннисем патне чĕнсе çырнине йышăнчĕ.

„Рабочисем тата работницăсем, врачсем тата учителсем, социалисăмла тăван çĕршывăн мĕн пур хĕрӳлĕ патриочĕсем, — тенĕ чĕнсе çырнинче, — болшевикла партин тĕрĕс ывăлĕн — Андрей Александрович Жданов кандидатуришĕн сасăлăр тата агитацилĕр".

Тăвăллăн алă çупнипе Сталин тата Жданов йулташсене саламласа çырнине йышăннă.

Пĕрремĕш кăтартулă типографи коллективĕ Николай Иванович Йежов кандидатурине тăратнă

МУСКАВ, октябĕрĕн 23-мĕшĕ. Сойуз Советне депутата суйлама кандидатурă тăратас тата сӳтсе йавас ыйтупа пĕрремĕш кăтартулă типографири рабочисен, инженерла-техникălă работниксен тата служачисен пилĕк пин çынлă коллективĕн пухувĕ пулса иртнĕ.

Пухура чи малтан типографири ватă рабочи Шуршалин йулташ сăмах илнĕ. Вăл çапла каланă:

— Пайанхи кун епĕ пирĕн çĕршыв Ленин—Сталинăн коммунисла партийĕ йертсе пынипе тунă аслă çитĕнӳсем çинчен каламасăр тăма пултараймастăп. Вăл çитĕнӳсене Сталинла Конституцире ĕмĕрлĕхе çырса хунă. Епĕ—партире тăман çын, анчах манăн шухăшсем, кăмăлсем, ĕмĕтсем пĕтĕмпех болшевиксен аслă партийĕпе пĕрле. Епĕ пур ĕçре те, пур çĕрте те парти тата пирĕн йуратнă çулпуçĕ—аслă йулташ Сталин пирĕншĕн тăрăшнине курса, туйса тăратăп. Пирĕн çĕршыв, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ йертсе пынипе, социалисăмла хăватлă державă пулса тăчĕ.

Пирĕн Сталинла Конституци—тĕнчери чи демократилĕ Конституци пур,—вăл етемлĕх историнче халиччен пулман документ пулса тăрать. Епĕр, Сталинла Конституци тăрăх, Аслă Совета Тăван Çĕршывăн чи тивĕçлĕ ывăлĕсене, пирĕн рабочи класăн ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин партийĕн ĕçĕшĕн йаланах çирĕп кĕрешсе пынă, халĕ те çавăн пекех çирĕп кĕрешсе пыракан çынсене суйлатпăр.

Епĕр кĕрешсе илнисем, пирĕн политикăлă правасем пит аслă, вĕсене Сталинла Конституци гарантилет. Усал тăшмансем, ирсĕр шпионсемпе диверсантсем, пирĕн Тăван Çĕршыва тăшмана сутасшăн пулнă йĕрĕнчĕк предателсем—троцкиссем, зиновйевцăсем, бухаринцăсем тата ытти çĕлен-калтасем пирĕнтен епĕр кĕрешсе илнисене, пирĕн правасене туртса илесшĕн пулнă. Вĕсем пире каллех капиталисăм пусмăрне кĕртсе ӳкересшĕн пулнă. Анчах çавна вĕсем тăваймарĕç!

Мухтавлă наркомвнуделцăсем, аслă Сталинăн шанчăклă соратникĕ—Николай Иванович Йежов йулташ йертсе пынипе, халăхăн тăшманĕсене преступлени тунă çĕртех тытрĕç те, вĕсене тивĕçлипе мĕн памалине пачĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ). Епĕ, хамăрăн коллективран, Николай Иванович Йежов йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратма сĕнетĕп. (Тăвăллăн алă çупаççĕ. Саламласа калаççĕ: „Сывă пултăр халăхăн шанчăклă ывалĕ, пирĕн Сталинăн çывăх соратникĕ—Йежов йулташ!". Вăрахчен „урра!" кăшкăраççĕ).

Пухура тухса каланисем пурте Шуршалин йулташ панă сĕнӳ майлă пулса хĕрӳлĕн каланă.

Пуху пурте пĕрсаслăн çакăн пек постановлени йышăннă:

„Пĕрремĕш кăтартулă типографинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен йачĕпе, Киров суйлав округĕ тăрăх, аслă Сталинăн çывăх соратникне, социалисăмăн аслă çĕнтерӳвĕсен шанчăклă хуралçине, Совет халăхĕн йуратнă ывăлне, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн çирĕппĕн кĕрешсе пыракан бореца—Николай Иванович Йежова Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратас. Пĕрлехи пуху Йежов йулташа Киров суйлав округĕнче Сойуз Советне баллотировкăна тăма килĕшӳ пама ыйтать."

Пуху Сталин тата Йежов йулташсем патне салам йанă.

„Каучук" завод коллективĕ Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Н. С. Хрушчов йулташ кандидатурине тăратать

МУСКАВ, 24-Х. (ТАСС). „Каучук" заводăн Пысăк пӳлĕмĕнче йаланхи пек мар савăнăçлă. Заводăн тăватă пине йахăн рабочийĕсем, инженерĕсемпе техникĕсем, служăщчийĕсем Сойуз Советне кандидатурăсем тăратма тата сӳтсе йавма пухува пынă.

Чи малтан виççĕмĕш цехри партире тăман работницă-стахановкă Гвоздева йулташ тухса калать. Вăл социалисăм çĕршывĕн питĕ те паха çĕнтерĕвĕсем çинчен, ĕççыннисен телейлĕ пурнăçĕ çинчен, йуратнă тăван Сталин çинчен савăнăçлă мăнкăмăллăхпа калать. Мускавăн социалисăмла строителствăри çитĕнĕвĕсем питех те пысăк.

— Хрушчов йулташ, — шахтăр пулнăскер, граждăн вăрçин участникĕ, кĕрешӳре пиçнĕ болшевик, — тет Гвоздева йулташ, — вăл болшевикла çулйĕре çирĕппĕн, ниçта пăркаланмасăр тытса пырать. Хрушчов йулташ халăх тăшманĕсене — фашисăмăн троцкисла-бухаринла агенчĕсене пĕр шеллемесĕр тăпăлтарса пырса Мускаври партире тăракан тата партире тăман болшевиксене Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕппĕн пĕтĕçтерме пултарчĕ. Епĕ хамăр заводран Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Никита Сергейевич Хрушчовăн кандидатурине тăратма сĕнетĕп.

Гвоздева йулташа пухура тухса калакансем — партире тăман инженер Ватажин йулташ, заводри транспорт пайĕн начальникĕ Дмитрийев йулташ, комсомолкă Михайлова йулташ, партком секретарĕ Йушин йулташ хĕрӳлĕн хута кĕнĕ. Вĕсен сăмахĕсем социалисăмла тăван çĕршыва, халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа вĕçсĕр хĕрри сĕр парăннине кăтартнă. Хăйсен завочĕн примерĕпе вĕсем социалисăм çĕршывĕн питĕ те пысăк çитĕнĕвĕсене илемлĕн кăтартса панă. „Каучук" завод халĕ вăрçăченхинчен çĕр хут нумайрах продукци кăларса тăрать. Завод вырнаçса тăракан район ĕлĕк йухăнса кайнă лачакалă вырăн пулнă пулсан, халĕ Хĕрлĕ столицăн таса та илемлĕ пайĕ пулса тăнă.

Пуху Фрунзе суйлав округĕнчен Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Никита Сергейевич Хрушчовăн — Мускаври болшевикла организацин руководителĕн кандидатурине тăратас тесе пĕрсаслăн йышăнат.

Пухура Фрунзе суйлав округĕнчи суйлав умĕнхи канашлуа кайма çитмĕл представител суйласа хăварнă.

Владивостока илсе, Йапони интервенчĕсене тата шургвардейцăсене Инçет-Хĕвелтухăçĕнчен хăваласа кăларнăранпа 15 çул çитрĕ

Вунпилĕк çул кайала

1922 çулхи октаберĕн 25-мĕшĕнче халăхăн революцилĕ çарĕ Владивостока туртса илсе, пирĕн çĕршыва йаланлăхах Йапони интервенчĕсенчен тата вĕсене тара кĕрĕннĕ шургвардейцăсенчен тасатнă.

Владимир Илйич Ленин, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче интервентсене аркатса пăрахнине паларса, Мускав Совечĕн пленумĕнче каланă сăмахĕнче хĕпĕртесе çапла каланă:

„Халиччен тунисене туса çитерме мĕн чухлĕ парне хумала килнипе есĕр пит лайăх пĕлетĕр, граждан вăрçи мĕн чухлĕ вăрăма тăсăлнине тата вăл мĕн тери вăйăлнине есĕр пит лайăх пĕлетĕр. Акă ĕнтĕ Владивостока илни пире кăтартса парĕ (Владивосток, вĕт, инçетре, анчах, вĕт, вăл—хамăрăн хула-çке), пире пурне те—пур çĕртен те пирĕн пата, пирĕн кĕрешисе илнисем патне туртăннине кăтартса парĕ. Кунта та тата унта та Р.С.Ф.С.Р.“*)

Йапони интервенцийĕ Çамрăк Совет республикине хакла ларнă. Йапони интервенчĕсем пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçри çĕрсем çине тапăнса, пиншер-пиншер çын персе пăрахнă, асаплантарса вĕлернĕ, ачасем пиншерĕн анне-аммăшĕсемсĕр килĕр тăрса йулнă, нумай йалсене çунтарса йанă, çаратнă пурлăха пит нумай составсем çине тийесе Йапоние турттарса кайнă, станцисене тата паравозсене сиктере-сиктере йанă, пароходсене путарнă йе илсе кайнă, заводсене, фабрикесене, шахтăсене ишĕлтернĕ—çавăн пек пулнă йапонцăсен йунлă тапăнувĕ.

Йапони империалисĕсем тахçантанпах пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕ çине выçă куçпа пăхнă. Октаберти социалисăмла аслă революци пулнă хыççăнах Йапони Английе тата Францийе Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пĕрле интервенци тума сĕннĕ. Çур çулталăк иртсен вăл хăйĕн усал шухăшĕсене пурнăçа кĕртнĕ.

1918 çулхи апрелĕн 4-мĕшĕнче Владивостокра, укçа парса тара тытнă провокатăрсем, йапонцăсен „Исидо“ тенĕ хуту-илŭ кантурĕн хуçине вĕлернĕ. Çав çынна вĕлерни вăл провокаци пулса тăнине, ăна йапонцăсем вăрçăпа тапăнас тесе сăлтав тупма тунине тепĕр кунпех пурте пĕлнĕ. Апрелĕн 5-мĕшĕнче ирхине Йапонин çар карапĕсем çинчен дессант кăларнă. Йапони ескадрин командирĕ контр-адмирал Хирохору Като хулара пĕлтерӳсем çаптарса тухнă, çав пĕлтерӳсенче вăл, суйса: дессанта Йапонин граждăнĕсене хӳтĕлеме кăларнă, тесе çырнă. Йапони войенщинин çавăн пек провокацилĕ метăчĕсене пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрат.

Шургвардейцăсен бандисене пуçхса тата хăйсен вăйĕсене кӳрсе çитерсе, интервентсем хĕвелтухăçнеле, Çĕпĕр ăшнеле кайма тытăннă. Инçет-Хĕвелтухăçне тата Çĕпĕре Йапони çарĕсем 100 пин çынна йахăн килсе тулнă. Йапони империалисĕсем Инçет-Хĕвелтухăçне çамрăк Совет Республикĕнчен татса илесшĕн пулнă.

Анчах империалисла тискер кайăксене аркатмалах çапса çĕмĕрнĕ. Вĕсем пирĕн çĕр çине вăрçăпа тапăнма мĕлйард тенке йахăн тăкак курнă тата вĕсен çыннисем Приамурйепе Приморйе уйхирĕсенче вунпшар пинĕн вилсе йулнă. Йапони çарĕсем „пархатарсăр“ Çĕпĕртен тарнă пароходсен трӳмĕсенче йапонцăсен арĕсленĕ салтакĕсем çĕршерĕн пулнă. Йапони çарĕн чăçĕсенче революцилĕ хускалусем пуçланса кайнă.

Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ĕççыннисем—Тăван çĕршывăн çуламлă патриочĕсем, большевиксен партийĕ йертсе пынипе, ирсĕр захватчиксене хăваласа кăларса йанă. Интервентсен çарĕсене тата вĕсем тара тытнă шургвардейцăсене—йумахри пек чапа тухнă Волочайĕвкăпа Спасск патĕнче тата Лăпкă океанăн çыранĕсенче аркатса тăкнă. Халăхăн революцилĕ çарĕ тата хĕрлĕ партизансем хытă тапăнса пынă пирки Йапонцăсен „никама парăнман“ тесе мухтанакан çарĕсем аран-аран тарса ĕлкĕрнĕ.

Унтанпа 15 çул иртрĕ. Инçет-Хĕвелтухăçĕ чечекленсех ӳсрĕ. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе, Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи халăхсем, пĕтĕм Совет Союзĕнчи халăхсем пекех, хаваслă та телейлĕ пурнăç турĕç.

Анчах социалисăмăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи çутă çулĕ империалисăмла тискер кайăксен куçне çунтарат. Йапони войенщинин Совет çĕрĕсене тытса илес ĕмĕте пăрахман. Совет Союзĕпе Манчжури чиккинче тăтăшах сĕмсĕр провокацисем пулса пыни тата унта Йапонин çар çыннисем пĕрмайах чĕрре кĕртме хăтлании çавăн çинчен калат.

Йапони войенщини, ССР Союзпе хирĕç вăрçа тухма хатĕрленсе, пирĕн пата шпионсем тата диверсантсем йарса тăнă, халĕ те йарса тăрат. Вăл совет халăхĕн тăшманĕсем хушшинче хăйне ванъни шанчăклă тарçăсемпе агентсем, хăйĕн усал шухăшĕсене пурнăçа кĕртекенсем тупат. Йапони—Германи фашисăмĕн троцкисла-бухаринла агенчĕсем, хăйсен хуçисем хушнипе, Совет çĕршывĕн хуçалăхĕ тата политикăлă хăватне касăлтарма, унăн оборонă пултарулăхне хавшатма хăтланнă. Троцкисла-бухаринла шпионсемпе диверсантсем, пирĕн Тăван çĕршыва пысăккăн та, ваккăн та сутасшăн пулнăскерсем, Приморйепе Приамурйене Йапоние парасшăн пулнă, рабочисемпе хресченсене Йапони империалисĕсен пусмăрне кĕртсе ӳкересси пирки каварланнă. Вĕсен ĕçĕ тухмарĕ! Мухтавлă наркомвнуделщăсем çĕлен йăвисене пĕтерчĕç, халăха сутасшăн пулнă усал предателсене, ирсĕр изменниксене тĕп турĕç.

Халăхăн тăшманĕсем социалисăм строительствине чарса лартас тесе темĕн чухлех тăрăшассĕ пулсан та, Инçет-Хĕвелтухăçĕнче çĕнĕ пурнăç йăлтăр суттăн чечекленсе пырат. Рабочисем, колхозниксем, ĕç интеллигенцийĕ—Тăван Çĕршывăн шанчăклă ывăлĕсем хăйсем кĕрешсе илнине çивĕч сыхласа тăраççĕ. Вĕсем сыхă тăраççĕ. Вĕсем—тăшман çĕленкалта пекех таçта та кĕрсе кайма пултарнине, Йапони фашисăмĕн шпионĕсен йăвисенчен çĕнĕ çĕлен-калтасем шуса килме пултарнине пĕлсех тăраççĕ. Хĕрлĕ çар çĕршывăн чиккисене çивĕч сыхласа тăрат. Хĕрлĕ çар, унăн мухтавлă отрйачĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ Йалавлă Уйрăм Çар, пирĕн пограничниксем Йапони авантюрисĕсен тата вĕсене пулăшакансен провокацийĕсене хăйулăн та паттăрăн сирсе пыраççĕ. Тăшман пирĕн çине тапăнма хăйас пулсан, хамăрăн Тăван Çĕршыва тата историлĕ кĕрешсе илнисене сыхлама пĕтĕм халăх ура çине тăрат. Вăл Хĕрлĕ Çарпа пĕр хаваслă, пĕр хăватлă пулса, тăшманăн аллине çапса хуçат, тăшманăн никам çĕнтерейми Совет Союзĕпе кĕрешес килнине пĕтерсе хурат. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи ирĕклĕ те телейлĕ халăхсем ССР Союзĕн Аслă Совечĕн суйлавне—тĕнчери чи демократилĕ, Сталинла Конституци тăрăх пулакан суйлава хăйсен вăйне, хăйсен хăватне хаваслăн туйса хутшăнаççĕ.

*) Ленин, том XVII, стр. 362.

Ирĕке тухнă Приморйене салам

Чита. Инçет-Хĕвелтухăç республикин министăрĕсен совечĕн председателне

Октаберти çĕнтерӳлĕ революцин пилĕкçуллăхĕ тĕлне Хĕрлĕ çар Р.С.Ф.С.Р. тата унпа союзлă республикăсен территорине йут çĕршыв—оккупантсен çарĕсенчен пĕтĕмĕшпех тасатас тĕлĕшпе тата тепĕр татăклă утăм турĕ. Инçет-Хĕвелтухăç Республикин халăх-революцилĕ çарĕ Владивостока илни йапони империалисăмĕн йăвăр пусмăрлăхне тӳссе ирттернĕ вырăс граждăнĕсене Российăн ĕçхалăх массисемпе пĕрлештерет. Российăн мĕн пур ĕççыннисене тата паттăр Хĕрлĕ çара çак çĕнĕ çĕнтерӳ тунипе саламласа, Инçет-Хĕвелтухăç Республикин правительствине ирĕке тухнă облăçсен тата Владивосток хулин мĕн пур рабочийĕсемпе хресченĕсене Р.С.Ф.С.Р. Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен салам калама ыйтатăп.

Р.С.Ф.С.Р. Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
Ульйанов (Ленин).

26. X. 1922.

„Правда“ № 243, октаберĕн 27-мĕшĕ, 1922 ç.

Пĕтĕм Российăри Ĕçтăвакан Тĕп Комитетăн IX созыври сессинче 1922 ç. октаберĕн 31-мĕшĕнче каланă сăмахран

Йулташсем! Мана, саламлă нумай мар çхç сăмахсем каланипе чарăнса тăма ирĕк парăр. Чи малтан, паллах, пирĕн хамăр Хĕрлĕ çара салам йамала, вăл çак кунсенче хăйĕн паттăрлăхне тепĕр хут кăтартса пачĕ, Владивостока илсе, совет республикипе çыхăнса тăракан республиксенчен йулашки республикă территорине тасатрĕ. Епĕр кунта пурсăмăр та Хĕрлĕ çарăн çĕнĕ паттăрла ĕçне тата çавăн пекех вăрçа пĕтерес тĕлĕшпе çителĕклех татăклă, пулас, утăм тунине: шургвардейцăсен йулашки вăйĕсене тинĕсе хăваласа йанине саламлатпăр тесе каланипе епĕ пурин шухăшĕсене те палăртасса шанатăп: Пирĕн Хĕрлĕ çар шургвардейцăсем Российă çине, пирĕнпе тӳррĕмĕн йе айăккăн, таччăн йе мĕн чухлĕ те пулсан инçетрен çыхăнса тăнă кирек хăш республикă çине те кирек мĕнле хĕсесе килме тепĕр хут пултарасран пире нумай вăхăта хăтарчĕ пулĕ, тесе шухăшлатăп епĕ.

Анчах, сасартăках ытла та мухтанчăклă сăмахсем калас çул çине тăрас мар тесен, çавăнпа пĕрлех пирĕн çакна та каламала: кунта ĕçе татса пама Хĕрлĕ çарăн паттăрлăхĕпе унăн вăйĕ кăна мар, тĕнчери лару-тăру та тата пирĕн дипломати те пулăшрĕç.

(Ленин, сочинения, т. XXVII, изд. III).



Ӳкерчĕк çинче: „С. Лазо сăмах калани“. (С. Лазо—Приморйери партизансен отрйачĕн командуйушчийĕ. Ăна 1920 çулта йапонцăсем плена илсе тискер кайăкла паровоз кăмакине пăрахса çунтарнă). (Союзфото).

Йапонцăсем Инçет-Хĕвелтухăçĕнче тунă тискер ĕçсем

Йапони отрйачĕсем Приморйере пур çĕрте те çынсене вĕлернĕ, çаратнă, пусмăрланă тата мăшкăланă. Вăхăтлăх правительствăн—Приморйе облăçĕнчи земски Управăн—урăх çĕршыв ĕçĕсен управлайушчийĕ Йапонин Çĕпĕрти дипломатилĕ миссине çавăн пек „правана пăснисем“ çине пĕр хут мар „çавăрăнтарса пăхтарнă“. Анчах „советник“ господин Инçет-Хĕвелтухăç пуçлăхĕсен „меморандумĕсем“ çине ответ пама та кирлĕ мар тесе шутланă. Йапони миссинчи господасем Приморйе çине хăйсен императорĕн колонийĕ пек пăхнă. Вăрăхурахланма чарăнман.

Акă Приморйере йапонцăсем „правасене пăснин“ списăкĕ, вăл списăка „меморандумсенчен“ пĕринче миссине пĕлтернĕ, анчах мисси чинĕсем ун çине çавăрăнса та пăхман.

Иманск вулăсĕнче Сергей Доположукпа унăн Игнатий йатлă ывăлне вĕлернĕ. Вĕсен пурлăхне пĕтерсе хунă. Никольск-Уссурийск уйесĕнчи Черниговкă йалĕнче Оланасенко йатлă Румыни граждăнинне ним айăпсăрах персе вĕлернĕ. Гедике разйесĕ патĕнче лини йусакан рабочине, Федор Дворйака, персе пăрахнă. Вйаземская станцинче Иван Бескровный рабочине, чукунçул çинчи 608-мĕш çухрăмри сторăжа Гордей Цибунскине, унăн арăмĕпе икĕ ачине вĕлернĕ. Крайевск разйесĕнче Василий Иванченко рабочине персе пăрахнă.

Сихоте—Алинь сăртĕнчи Сучан чукунçул йӳппинче нимĕн ыйтса пĕлмесĕрех тăвата вырăса арĕсленĕ. Некрасовск вулăсĕнчи Свечино йалĕнче йапонцăсем Иван Шчепка, Иван Сердӳк, Виктор Бережный, Василий Сечка, Андрей Осипов, Григорий Акимов тата ыттисен çурчĕсене çунтарса йанă.

Князе-Волконск вулăсĕнчи Анастасейевкă йалĕнче висĕ киле вут тĕртсе çунтарса, пурлăхĕсене çаратса тухнă. Кунта Йапони отрйачĕ мирлĕ граждăнсене нумай хĕнесе пĕтернĕ тата Князе-Волконскри кивçенлĕх йулташлăхĕнне укçа вăрланă. Никольск-Уссурийскинче Йапони офицерĕ хулари ача-пăча прийутĕнчи учителе хĕненĕ.

* * *

Верхнеудинск уйесĕнчи йалсем çине йапонцăсем час-часах пыра-пыра тапăннă. Хара-Шибирск йалĕнче Йапони отрйачĕ 71 киле вут тĕртсе çунтарнă тата хресченсенчен çаратнă тĕрлĕрен пурлăхсене ылтăн укçа шучĕпе 30 пин тенкĕлĕх илсе тухса кайнă. Мало-Куналейск вулăсенчен интервентсем икĕ пин лаша илсе тухса кайнă. Хохолайа йалĕнче йапонцăсем халăхăн мĕн пур лайăх тумтирĕсене туртса илнĕ, пĕтĕм лашасене кӳлмели таврашĕпех пуçтарса илнĕ. Кунта йапонцăсем çаратнишĕн тарахакан вунă „парăнман“ çынна пăшалпа персе вĕлернĕ.

* * *

Амур облăçĕнче интервентсем темиçе почтăпа телеграф кантурне çаратнă.

* * *

Никольск-Уссурийскинче водокачкăра тата прачечнăйĕнче ĕçлекен машинис М. Ф. Беликов водокачкă çуртĕнче хăйĕн çемйипе пурăннă. Унчухне Никольск-Уссурийскинче Йапони интервенчĕсем хуçа пулса пурăннă.

Пĕрре ирхине Беликовăн пĕтĕм çемйи—вăл хăй, арăмĕ, амăшĕ тата икĕ ачи—килте ларнă чухне алăкран такам шакканă. Унтан никама та кĕтмен çĕртанех, хватер хуçине тĕксе йарса, пӳрте Йапони салтакĕсен ушканĕ тапăнса кĕнĕ. Йапонцăсем семйене урама тĕксе кăларма пуçланă. Беликов арăмĕ хирĕç тăнă. Пĕр салтакĕ ăна çавăнтах винтовкăран персе вĕлернĕ. Беликова штыкпа чиксе амантнă. Унăн амăшне салтаксем прикладсемпе хĕненĕ. Тискер ĕç тунă хыççăн йапонцăсем тухса кайнă.

Тепĕр кунне йапонцăсем Беликов хватерне татах пынă. Йапонцăсем ухтарнă, Беликов амăшĕн куç умĕнчех бандитсем ухтарса тупнă икĕ хачă, бритва пĕтĕм хатĕрĕсемпе, ылтăн çĕрĕ, 1 тенкĕ те 80 пус кĕмĕл укçа тата 2 370 тенкĕ хут укçа вăрласа тухса кайнă.

* * *

Йанчихинск вулăсĕнчи Заречйе йалне Йапонин кавалери отрйачĕ пырса кĕнĕ. Урам тăрăх стройпа тухнă чухне, отрйад начальникĕ шкул çуртне асăрхаса илнĕ. Вăл отрйарада шкул йенне çавăрнă та, ăна хăй тĕллĕнех йышăннă. Йапонцăсем шкула лашасемпех кĕрсе кайнă, лашисене учителсен пӳлĕмне вырнаçтарнă. Партăсене, класри доскасене тата хăйсене чăрмантаракан ытти пурлăха Йапони салтакĕсем урама кăларса ывăтнă. Заречйе йал обшчĕстви хирĕçлени те пулăшман. Шкулта занятисем чарăнса ларнă.

* * *

Дубинск разйесĕнчи стрелочник Платон Паческа Никольск-Уссурийск уйесĕнчи земски управăна заявлени панă, унта вăл çапла çырнă:

„Разйесра тăракан Йапони салтакĕсем манăн ĕне çиллине штыксемпе чиксе витĕрех шăтарчĕç“.

* * *

Хабаровскри Амур урамĕпе Йапони офицерĕ Хайда Танаки иртсе пынă. Урам кĕтессисенчен пĕринче иккĕмĕш участкăри постовой милиционер Гусев дежурнăй пулнă. Гусев тĕлне çитсен, Танаки кăсйерен револьвер туртса кăларнă та, милиционера умранах тĕллесе пенĕ. Офицер начар стрелок пулнă пулмала—пульă тĕлленĕ çĕре лекеймен. Тăваттăмĕш участкăри милици начальникĕ çав вырăнтан айакрах пулман, вăл Гусева пулăшма васкаса пынă. Начальникпе Гусев Йапони офицерне йарса тытнă та, милицине илсе кайнă. Милицинче унран: — пострта тăракан милиционере мĕншĕн пăшалпа петĕн? — тесе ыйтсан, Хайда Танаки вырăс чĕлхине пăсса:

— „Моя играй!..“ — тесе намăса пĕлмесĕр ответленĕ.

Ч. Фадейев

Сергей Лазо

1919 çулхи йанвар йе феврал уйăхĕнче мана рабочи слободкăра пытанса пурăнакан Дельвиг большевика хватертен пĕрремĕш çырмана ăсатса йама хушрĕç, унта чукунçул çинче ĕçлекен рабочи—„Митă пичче“ тесе чĕнекен большевик пурăннă.

Дельвиг—Çĕпĕрти Советсен Ĕçтăвакан Тĕп Комитетĕнчи (Центросибирь) работник пулнă, вăл Владивосток мĕнле вырăнта ларнине пĕлмен.

Митă пичче патне епĕр питĕ нумай халăх пухăннă вăхăтра пырса кĕтĕмĕр. Кунта большевиксен Инçет-Хĕвелтухăç крайĕнчи Комитечĕн пленумĕ пухăннă.

Епĕ пĕр илемлĕ пит-куçлă, 23 çулхи çамрăк çын çине çавăрăнса пăхрăм, вăл ыттисенчен пĕр пуç çӳлĕшех вăрăмрах, пичĕ тĕлĕнсе каймала хитре. Вăл Сергей Лазо пулнă.

Епĕ ун çине, вăл çав тери илемлĕшĕн мар, пленума пухăннисенчен нумайĕшĕсем унпа уйрăмах урăхла—ачашшăн та хисеплесе каласнă пирки çавăрăнса пăхрăм.

Кунта епĕ Сергей Лазо докладне итлерĕм. Кунччен те епĕ докладсем нумай итленĕ. Анчах Лазо доклачĕ мана хăйĕн çав тери вăйлă логикипе тĕлĕнтерсе йачĕ. Лазо тĕрĕс, кĕскен, тезис пек каларĕ. Маншăн вăл çырса хунине вуланă пек туйăнчĕ.

Лăпкă океан çинчи хирĕçӳсем çинчен вăл туса панă анализа епĕ халĕ те лайăх астăватăп. Вăл аналиçăн вăйĕ халĕ те çапли пех йулат-ха.

Епĕ Лазопа Сучанри партизанла йухăм вăхатĕнче çывăхраххăн паллашрăм.

Çав 1919 çултах, май уйахĕн вĕçĕ йе ийунь пуçламĕшĕ. Ольгинск уйесне пĕтĕмпе тевĕ пекех шуррисенчен тасатнă. Çурçĕре, Ольгинскпа Тетух çывăхне, кайнă агитацилĕ походран епĕ Фроловкă салине, партизанла отрйадсен штабне тин çеç таврăнтăм. Кунта епĕ Владивостокра пытанса ĕçлекен работниксен пысăк ушкăнне тĕл пултăм. Вĕсем хушшинче Лазо та пулнă.

Сергей Лазона Комитет главнокомандуйушчи туса йанă. Партизанла йухăм пуçланнăранпа революцилĕ штаб пирвайхи хут главнокомандуйушчине уйăрса лартнă. Халиччен командирсене пурне те суйланă. Тĕрĕссипе илсен, главнокомандуйушчи пулман. Революцилĕ штабăн председателĕ, штаб начальникĕ тата отрйад командирĕсем пулнă, вĕсем те, ротă тата взвод командирĕсем пекех, суйланăскерсем.

Главнокомандуйушчи пулма пĕр паллă мар çын килни çинчен хыпар тухсан, партизансенчен кайарах йулнисем, вăл шутрах хăшпĕр отрйад командирĕсем те, хумханма, шавлама пуçларĕç.

Йĕнер çинчен ансан тӳрех епĕ партизансен пысăк митингне пырса кĕтĕм, митинг Фроловкăри революцилĕ штаб çурчĕ патне пухăннă. Митинг мĕнле пулнине хаваслансах ăсра тавçăрса илме те йăвăр. Правилă тăрăх пухнă пекех, пурте пур: председателĕ те, секретар те, анчах вĕсен йĕритавра етемсен тинĕсĕ çухăрат те туллашат. Çав тери хытă хĕрсе кайнипе, çынсем пĕрпĕрне винтовкăсемпе, шашкăсемпе хăратаççĕ. Организацилĕх пуçламĕшпе çакăн пек стихийă хушшинчи кĕрешӳ икĕ-висĕ сехет хушши пычĕ.

Кунта епĕ Лазон хăшпĕр тĕлĕнмеле пахалăхĕсемпе паллашрăм.

Пĕрпĕринпе хутшăнсси çав тери çивĕчленсе кайнă пулин те, вăл массăна хăйне итлеттерме пĕлнĕ. Çав митинг епĕр çĕнтернипе пĕтрĕ. Партизансен йышлă массисем Лазо кам иккенне пирвайхи хут пĕлчĕç.

Çакăн хыççăн вăл йулташĕсемпе пĕрле партизанлă лăпкă мар районсене тухса кайрĕ. Унăн çав районсенче тата пысăкрах кĕрешӳ тӳсмеле пулнă. Унпа пĕрле нимĕнле хĕçпăшаллă вăй та пулман, вăл парти авторитечĕпе тата хăйĕн йачĕпе усă курса çеç ĕçленĕ.

Çапăçура хăйулă пулнă, пĕлсе йертсе пынă пирки Лазона партизансем пысăккăн шаннă. Фроловкăна таврăннă çĕре вăл ĕнтĕ массăсем хушшинче йышăннă, авторитетлă çын пулнă. Ăна аслă йулташ пек итлене. Тĕрĕсех астăваймастăп, те ийунь уйахĕнче, те ийульте, епĕр Ольгинск уйесĕнчи поветанцăсен сиесне пухрăмăр.

Сиес Сергейевкă йалĕнче пулса иртрĕ, çав йалтан çирĕм километрта американцăсемпе кĕрешӳ пырат ĕнтĕ тата кĕç-вĕç Йапони десантне кĕтеççĕ.

Сиесра епĕ Сергей Лазо хĕрӳлĕ те аслă политик тата боец пулнине пĕлтĕм. Пĕр иккĕленмели те çук, хăйĕн теорилĕ пĕлӳвĕпе тата ăс-тăнĕпе вăл пирĕн мĕн пур работниксем хушшинче чи пысăк çынсенчен пĕри пулнă. Лазо ес-ерсен представителне хирĕç тухса каланине питĕ лайăх астăватăп. Тĕрĕссипе каласан, Лазо ăна темиçе минута хушшинчех нимĕне тăман—пурте ылханакан, пурте мăшкăлакан йапала туса хучĕ.

Çав сиесра Сергей Лазона, калас пулат, Приморйери партизанла вăйсен главнокомандуйушчийĕ пулма пĕтĕм халăхпа çирĕплетнĕ.

Çапăçусенче Лазо мĕнле пулни çинчен каласа парам. Пĕр интереслă штрих: вăл питĕ çӳлĕ çын пулнă, лаши вара унăн темшĕн пĕчиккĕ пулнă. Йĕнер пусмисем кăшт çеç çĕре перĕнмеççĕ, лаша çине утлансан хăй каланча пек курăнат. Çапăçура Лазо кĕтмен çĕртенех хăйулă та васкавлă майсем тупма пĕлнĕ, анчах çав вăхăтрах ĕçе питĕ шутласа тунă, йĕркелĕ тата пачах шиксĕр пулнă.

Епĕ унчухне рйадовой боец çеç пулнă, çавăнпа та партизанла кампани пирки Сергей Лазо туса хатĕрленĕ плана пĕлмен. Анчах та, хамăн опыт тăрăх, çакна пĕлетĕп: вăл килнĕ хыççăн епĕр чукунçул çинче активлăн ĕçлеме пуçларăмăр. Тĕрĕссипех каласан, епĕр Сучанри руднике хуларан татса илтĕмĕр. Анчах пире хирĕç хисеп йенчен пирĕнтен тем тери нумайрах тата вăйлărах хĕçпăшалланнă Йапони чаçĕсене йачĕç. Йапони вăйĕсем çав тери нумай пулнă, вара епĕр вĕсене хирĕç тăма та пултараймарăмăр, çапăçа-çапăçа кайала чакса, ирĕксĕрех Сучан тайлăмне тасатмала пулчĕ.

Партизансен пĕр ушкăнĕ Сучанрен тухса каймарĕ, кунтах, Сучан тайгинчех çирĕпленсе ларма хăтланчĕ; епĕ те çав ушкăнпа пĕрле йултăм. Лазо ытти йулташсемпе пĕрле Аничино йалĕн районне кайрĕ.

Колчаковщинăна çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, 1920 çулхи феврал йе март уйахĕнче, большевиксен Инçет-Хĕвелтухăç конференцийĕнче, Никольск хулинче, епĕ Лазопа тепĕр хут тĕл пултăм, Спасско-Иманск çар районĕнчи парти организацийĕ вăл конференцие мана делегата суйласа йачĕ. Лазо унчухне Армин Çар Совечĕн председателĕ пулнă.

Вăл вăхăтра çарта политикăлă комиссарсен институтне тунă, вăл комиссарсене пирĕн патра политикăлă уполномоченнăйсем терчĕç. Лазо пирĕнпе, çар делегачĕсемпе, пирĕн района политикăлă уполномоченнăй пулма кама лартасси çинчен сӳтсе-йаврĕ.

Йулашки хут епĕ Лазопа Йапони выступленийĕ пуличчен икĕ ерне маларах тĕл пултăм, — епĕ кунта 1920 çулхи апрелĕн 5-мĕш ыран тенĕ чухне çĕрле пирĕн гарнизон çине Йапони çарĕсем тапăнни çинчен калатăп. Темĕнле ĕçпе мана Владивостока командировкăна йачĕç, вара епĕ Лазо хватерне кайрăм, числине астумастăп. Унăн хватерне, колчаковщинă вăхăтĕнче Владивостокра пытанса пĕрле ĕçленĕ тусĕсем пуçтаранна. Питĕ хаваслă пулнă, пирĕнтен нумайĕшĕсем пĕр-пĕрне çулталăка йахăн курмасăр пурăннă, пирĕнтен хăшпĕрисем авланма та ĕлкĕрнĕ ĕнтĕ. Çав тери туслă атмосферă пулчĕ. Лазо çак обшчĕствăн центрĕ шутланаччĕ, хăйĕн илемлĕ, хура, аслă куçĕсемпе йăлтăртатса нумай кулчĕ. Пирĕнтен нихăшĕ те вăл часах вилесси çинчен шухăшламан.

Лазо чи малтанах пролетарилĕ революционер, йулашки йун тумламне пама хатĕр тăракан революционер, çав вăхăтрах пултарулă, аслă, пур йенчен те талантлă çын пулнă. Кунсăр пуçне вăл çав тери ĕçлеме йуратакан тата ĕçлеме пултаракан çынччĕ, кирек йепле ыйтува та пур йенчен те вĕçне çитийех тĕпчесе вĕренетчĕ. Çав вăхăтрах вăл хăйне мăннăн тыткаламасчĕ тата хăйне-хăй ултавлăн йуратни те пулман унăн.

Йапони çарĕсем тапăнсан, пирĕн Спасск гарнизонне хуларан хĕссе кăларчĕç, тата темиçе уйăхран гарнизонпа Владивосток хушшинчи çыхăнува татрĕç. Епĕр Лазона, унпа пĕрле Всеволод Сибирцева тата Луцкине йапонцăсем йарса тытни çинчен илтиччен нумай вăхăт иртрĕ. Вĕсене вĕлернĕ тенине ĕненес те килмесчĕ.

Йапонипе килĕшӳ тунă хыççăн епĕ тепĕр хут Владивостока лекрĕм — вăл август уйăхĕнче пулнă, унчухне пур хаçатсем те: „Ăçта Лазо, Сибирцев, Луцкий?“ текен аншлагпа тухаччĕç. Йапони командованийĕ: çав çынсем çинчен нимĕн те пĕлместпĕр, тесе „официалла“ пĕлтеретчĕ. Анчах — кучăн маррине епĕр пурте пĕлнĕ.

Çулталăк иртсен çеç, свидетелсен показанийĕсем тăрăх тата çав показанисене çирĕплетекен документсем тăрăх, çакна пĕлме пултартăмăр: нихçан манми паттăр туса — пирĕн Сергей Лазопа унăн икĕ шанчăклă йулташне Йапони войенщини паровоз кăмакинче çунтарса йанă.

1937 ç.

Тури Ачак йалĕ Социалисăмлă Аслă революци 20 çул тултарнă тĕле

Ĕлĕкхи саманара епĕр нимĕнле права тĕлне те пĕлмен

Ĕлĕкхи саманара епĕр нимĕнле права тĕлне те пĕлмен. Халĕ иртнисене асăнма та йавăр. Пирĕн атте хавшак чĕрелĕ çын пулнă. Вăл хăй ĕмринче пĕр вырăнта шăпланса пурăнайман. Пĕрех май çÿренĕ, пĕрех май ырă пурнăç шыранă. Çапла хускалнă чĕрипе Йарославăлĕн—Рыбинскин çÿресех иртернĕ вăл ĕмĕрне, анчах тăранса пурăнмалăх çăкăр татăкĕ тупайман. Çÿресен-çÿресен, чунĕ тăварланса çитнипе ĕçме пуçланă. Йулашкинчен килти пурлă-суклă пурлăха йухăнтарса пĕтерчĕ те, çĕре кĕчĕ.

Аттерен епĕ 11 çулхи ача йулнă. Картишĕнче пирĕн ун чух пĕр чăх, пĕр сурăх пулнă. Апи çак мĕскĕн хуçалăх çине пăхрĕ-пăхрĕ те, пире йăмăкпа иксĕмĕре маçак патне хăварса, качча тухса кайрĕ. Йултăмăр вара епĕр тăлăх-туратсем—выçă, ăшă кĕтессĕр, тивлетсĕр. Епĕ, хут вĕренме Хучаша икĕ çул çÿренĕскер, хуçăлнă ĕмĕтпе хама валљи çăкăр татăкĕ шыра пуçларăм.

Асаплă ÿснĕ епĕр, халљхи çамрăксем пек савăнăç тĕлне пĕлмен. Халљхи çамрăксене колхоз йалтах шкул уçса панă, клуб та пур вĕсен, гармоне-патефонне те илсе панă. Çамрăксен хорĕ акă кăçал радиофестиваљрĕ пĕтĕм республика умне тухса йурларĕ. Епĕр çĕр çине чĕркуçланса тăрса тырă вырнă, анчах тăранмалăх çăкăр çисе курайман.

Пирĕн кунта ана-çарансем çырма-çатралă, çĕрĕ сахал та хытă пулнă. Ĕлĕкхи вăхăтра чи лайăх çĕрсенче, чи лайăх çулта та теçетинран 50—60 пăтран ытла туса илмен. Тырă пулас çĕр çук пирĕн, тетчĕç йалçыннисем. Анчах халљхи вăхăтра ку сăмах пĕтĕмпех суйа пулса йулчĕ. Болљшевиксен агротехникă пирĕн çĕре пысăк вăй, тулли пултарулăх пачĕ.

Малтанах пире пĕтĕм çĕр лаптăкне колхоз çумне ĕмĕрлĕхе çирĕплетсе пани нумай пулăшрĕ. Ĕлĕк çĕрсем пирĕн темиçе йалпа пĕрле пулнă, вĕсем йалтан айакра таткă-кĕсĕкĕн сапаланса выртнă. Çĕре пĕрехмай валеçнĕ, каскаланă, алран-алла куçарнă. Колхоз пуçлансан та çĕр часах йĕркене кĕмерĕ. Пусуçăварнăшсем тек-текех улшăнатчĕç, бригадăсем хушшинче çĕр валеçес ĕçĕн вĕçĕ çукчĕ. Халљ апла мар. Акт—саккун. Çĕр—колхозăн. Ăна тимлени-пăхни халљ çапла кай маст. Çулсерен халљ уйа темиçе пиншер лав тислĕк, торф, çырма йушкăнĕ кăларатпăр. Фекали, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл, тĕрлĕ ыйшши минералсем—пĕтĕмпех çĕре çемçетме кайаççĕ.

Иртнĕ 1936 çул уйар, типĕ çул пулнă пулин те, епĕр тĕштырă гектартан вăтам шутпа 15,80 центнер туса илнĕ, кăçал вара 22 центнер илтĕмĕр.

Епĕ 3-мĕш бригадăна 1936 çулхи кĕркуннерен тытса пыратăп. Ыраш айне епĕр бригадăпа 1563 лав тислĕк, 315 лав торф тата унпа пĕрле 17 лав фекали кăлартăмăр, суртырри айне вара тислĕк 817 лав, фекали 18 лав, торф 327 лав, минерал 16 центнер кăлартăмăр. Кунсăр пуçне, ыраш калчине кĕлпе, фекалипе, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тăрантарнă. Сĕлĕ, тулă, пăрçа вăрлăхĕсене йаровизаци туса акнă. Мулчировани тунă.

Çĕртен епĕр кашни çул темиçе пиншер пăт тырă илетпĕр. Ахалĕн тыра пулмаст. Çĕре лайăх тăрантармала. Куна пирĕн колхозниксем лайăх ăнланса илчĕç. Вĕсем тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Иртнĕ хĕлле фекалипе торф турттарнă çĕрте Назаров Феодор, Захаров Михаил, Волкова Анастаçийа, Назарова Перасковйа колхозниксем уйрăмах хытă ĕçлерĕç. Фекалине Йетĕрнерен (17 клм) турттарма лекрĕ. Колхозниксем ÿркенмерĕç. Çапла ĕçленипе ман бригадăн пĕр ыраш кăна ытти бригадăсеннинчен пин пăта йахăн ытларах тухрĕ. Ĕçкуне пуçне кăçал çур пăтран кайа памастпăр. Килес çул агротехникă йĕнепе тата ытларах ĕçсем тума палăртатпăр.

Колхоз мана ура çине тăма пулăшрĕ. Колхозра ĕçлесе пынипе епĕ 1931 çулта пÿрт лартрăм. Аттерен мана мĕн пур пурлăх пĕр чăхпа пĕр сурăхсăр пуçне нимĕн те йулман пулсан, халь манăн пурте пур. Атте вилнĕ хыççăн, качча кайса пире пăрахса-турата хăварнă апи те, халĕ епĕ лайăх пурăна пуçласан, ман патна килсе тавăранчĕ. Пурнăçăмăр çителĕкле. Пурнăç прависем пысăк. Çакăн пек пурлăхла пурнăç панăшăн епĕ совет влаçне, колхозлă йĕркене тав тăватăп. Çитес çул суйлавра пире никамшăн та мар, пире ыра пурнăç паракан шанчăклă çынсемшĕн çес сасăлатăп.

А. Т. Йажейкин.

Виççĕмĕш бригадăн бригадирĕ.

Колхоз çамрăкĕсем

Пирĕн комсомол организацинче 13 комсомолец. Вĕсенчен халљхи вăхăтра пĕрисем — политграмата кружокĕнче, теприсем парти истори кружокĕнче вĕренеççĕ. Колхозра чылай комсомолецсем ответлă вырăнсенче тăраççĕ.

А. М. Краснов, „ватă" комсомолец, коммунис, орденоносец—колхоз председателĕ, комсомол Чăваш Обкомĕн членĕ.

Андрейева Перасковйа—колхозри учотчица, комсомол Чăваш Обкомĕн членĕ.

Андрейева Пелагейа — коњух, Йефимова Анна—дойарка, Н. Волков—кинотехник, И. Василйев—клуб заведуйушчийĕ, драмă кружокĕн руководителĕ, Громова Анна—техник—полевод.

Комсомолецсем културăлă-массăлă ĕçе йалти çамрăксене активлăн хутшăнтараççĕ. Клуб çумĕнче халĕ хор тата драмă кружокĕсем ĕçлеççĕ. Хорта—27 çын, драмă кружокĕнче—17 çын тăрат.

Октăбĕр уйавĕпе Аслă Совета суйламали куна колхоз çамрăкĕсем çĕнĕ йурăсемпе кĕтсе илеççĕ.

И. Потапов.

Йетĕрне районĕнчи Тури Ачакри „Крестьянская газета" йачĕпе тăракан колхоз председателĕ, орденоносец А. М. Краснов йулташ

Манăн ĕмĕтсем пысăк

Манăн ĕмĕтсем пысăк. Пилĕк ача—пилĕк ĕмĕт. Пĕри акă асли, Степан, иртнĕ çулта Йетĕрнери педучилищăра вĕренсе тухрĕ те, халĕ Хĕрлĕ Чутай районĕнче учителре ĕçлет. Вăл çамрăк-ха, Октăбĕр револјуцинчен те пĕр çул кĕçĕнрех. Йалта пĕр-ик çул ĕçлесен, Степан малала вĕренме шутлат. Ун хыçĕнчи—Павел, 1921 çулта çуралнăскер, халĕ хулари йалхуçалăх техникумĕнче вĕренет—агроном пулат. Виççĕмĕшĕ—Йули, йалта 6-мĕш класра вĕренет, ăна врач тума шутлатăп. Ăста вĕренет. Темле ман ачасем, хам пек мăка мар, çырулăха лайăх ăнкарса пыраççĕ. Йулашки иккĕшĕ пĕчĕкçĕ-ха. Вĕсем пирки те шухăш пысăк. Хамăр çемйерех пур специаљнăç та пултăр тесен, вĕсенчен пĕрине—инженер, теприне љотчик тăвас. Пурте хамăн пулччăр—учителĕ, агрономĕ, врачĕ, инженерĕ, љотчикĕ.

Тăватăпах, пурне те çын тăвататăп. Хамăр тĕттĕм кунçулта пурăнса вĕренеймерĕмĕр, халĕ хăт ачасем вĕреннине курса савăнас.

Пурнăç çитти çитет. Кăçал акă ĕçкунĕсем 600 йахăн пухăнаççĕ. Правлени авă, пĕр ĕçкунĕ çур пăта йахăн тайас пек калаçат. Çемйипе сахалтан та 300 пăт тырă илетĕп. Картишĕнче—икĕ ĕне, тулли—сурăхсем. Пÿртре 20 тĕп патнеле чечек йешĕрсе ларат. Пурте пур. Халĕ ак хĕл умĕн хуралтăсене виттертĕм, хапха туса лартрăм.

Аслă Совета суйламали куна епĕ хатĕрĕн кĕтсе илетĕп. Чĕре савăнăçпа тулат. Ĕлĕкхи тĕксĕм кунран епĕр çутă куна куçрăмăр. Ачасем ирĕклĕн вĕренеççĕ, хам ирĕклĕн ĕçлетĕп. Ĕç ман алăра авă хам пăхакан „Пушка" йатлă ăйăр пекех выљçаса пырат. „Пушка" вăл—пирĕн Хĕрлĕ Çар фончĕ. Кирлĕ вăхăтра правителствă ыйтсассăн, епĕр „Пушка" пек лашасем вуншар кăларса тăрататпăр. Епĕр йаланах хатĕр.

И. С. Çеменов,

хуралçă—коњух.

Кулленхи тĕлпулусем

Иван Семеныч хăй пăхакан „Пушка" йатлă ăйăра кÿлчĕ. Епĕр вăрманти утарпа фермăна кайма пуçтарăнтăмăр. „Пушка" хăйĕн вăрăм хăлхисене выљçатса, картишĕнчен ташла-ташла йерипен кăна утса тухрĕ.

— Пушка — игрушка! — туртрĕ хуллен Иван Семеныч чĕн тилхепене. Ăйăр вара хăлхисене малала чăнк тăратрĕ те, çиле хирĕç вĕçнĕ пек ывтăнчĕ. Епĕ тăрантас тыткинчен хыттăн çатăрласа тытрăм, ман хăлхара çил шăхăрса кайрĕ. Кĕрхи хĕвелĕн йăмăх çуттипе йалтăранă чÿрече кантăкĕсем çиçĕм пек вĕлтлете-вĕлтлете иртрĕç. Пĕр самантра епĕр уйала тухса вăркăнтăмăр. Йал варринчи ватă йăмрасем, хăйсем тăпăлса чупайманнишĕн кĕвĕçнĕ пек, йал варринех кĕрлесе йулчĕç. „Пушка" пире часах Утар çырминеле çитерсе, куштăрканă çерем тăрăх пынăçем вăйлăрах сирпĕнтере пуçларĕ. Епĕ, тăрантасран тухса ывтăнас марччĕ, тесе çоç шухăшласа пыратăп. Çав вăхăтрах хытă кайнипе кăкăр хăвасла кăмăлпа çÿçенсе тулат, чĕре çÿлеле çĕклеңет.

— Аван-çке колхозăн çил-çунатлă учĕпе çÿреме.

Епĕр утара çитрĕмĕр.

Утарта халљ çулахи мар. Пыл-хуртсем сĕрлемеççĕ. Чечек кусĕсем çунĕ. Çырма тĕпĕнче кÿлленсе тăракан тăхлан тĕслĕ шыв çине ылттăн тĕслĕ çăка çулçисем йăвана-йăвана ÿкеççĕ. Салхулă пек. Анчах çук, ку кĕтес халĕ хăйĕн шалти тарăн пурнăçĕпе пурăнат.

Ватă хура сухаллă колхозник Роман Тимофейич халљ кăна туса пĕтернĕ омшаникĕн мĕн пур шăтăк-çурăкĕсене тĕплĕн мăк çапса питĕрет. Утар пуçлăхĕ П. И. Долгов, пушă вăхăт тупнă та, хурал пÿртĕнче хаçатсем тăрăх суйлав йĕркисене вĕренет. Хуралçă Арсентйев Андрей утар тавра çавăрăнса килсе пÿрте кĕчĕ. Калаçу хăй тĕллĕнех çыхăнат. Утарти колхозниксем суйлав саккунĕн тĕп ыйтăвĕсене лайăхах пĕлеççĕ пулин те, тата тĕплĕнрех ыйтса пĕлме васкаççĕ.

— Аслă Совет мĕншĕн икĕ палатăлă? Мĕнле вĕсен прависем? Суйлавçăсен спискине тунă хыççăн ман урăх çĕре куçса каймала пулсан, мана мĕн пулаççĕ? Спискăри тĕрĕсмарлăхсем çинчен панă зайавлениие кам пăхса тухат? тата ыт. те.

Пĕр йенчен колхозниксем нумай ыйтусене кунта айакран килнĕ çынсен пĕлĕвĕсене тĕрĕслес шухăшпа та хускатаççĕ пулмала. — Багажĕ пур-и? — теççĕ пулас. Хăйсем вĕсем суйлава хатĕр.

Икрĕн „Пушка" малала ывтăнат. Çурçĕр уй çырми пуçĕнче — колхоз фермин „çулахи лагерĕ". Епĕр унтала вăркăнса пыратпăр. Колхоз çулахи вăхăтра хăйĕн ĕнисене çавĕнех вăрманта усрат. Ĕнесем йур ÿкмесĕр йала таврăнмаççĕ. Апатçимĕç ирĕклĕ, шыв-шур йанта. Вырăнти ĕнесемех кунта çулахи вăхăтра талăкне 10—11-шер литр сĕт параççĕ.

Епĕр ĕнесене кураймарăмăр. Вĕсем вăрмана питех те шала кĕрсе кайнă. Фермă пÿртĕнче те пĕр хуралçăсăр пуçне никам та пулмарĕ.

Хуралçă—Иванов Паким—чылай пурăнса курнă шурă сухаллă, хытканатарах çын, епĕр вырса кĕнĕ чух, пÿртре çăпата туса ларатчĕ. Епĕр ăна ырă сунтăмăр, вăл пире малала иртме чĕнчĕ...

— Ĕнесем пăрулама та пуçларĕç, — пĕлтерчĕ вăл. Сăмах хускатас май, урайĕнче выртакан хĕрлĕ хăмăр пăру çĕкне кăтартса.

Сăмах хускалчĕ. Пирĕн хуралçăн пурнăçĕ çинчен ыйтса пĕлес килчĕ.

— Ĕлкĕрсех пыраймастăп çав. Ура та ман аманчăк та.

Паким Иваныч империалисăмлă вăрçăра аманнă. Унăн чĕркуççийĕ аманса ÿснĕ йăвăç тункати пек.

Чăн та мĕн курма пултарнă пулĕччĕ çак инвалид, капиталисăм пусмăрĕнче пурăнас пулсан? Нимĕн те мар—выçлăх вилĕм. Америкăри автомобил королĕ Генри Форд чăлахсене хĕсĕрлесе тĕлĕнне тĕнчере уйрăмах пысăк мухтав илнĕ. Вăл хăй патĕнче ĕçлесе сывлăх çухатакан рабочисене нинĕ-нинĕпе урама кăларса ывăтат. Пайан рабочи сывă—вăл ĕçлет, тепĕр кунне Фордăн конвейерĕ рабочийĕн аллине татса кайат—Форд ăна ĕçрен кăларат,—рабочи вилĕм умне куçа-куçăн пырса тăрат.

Пирĕн çĕршывра капиталисăм стройне пĕтерни çирĕм çул çитет. Сталинла Конституци хĕвелĕ айĕнче пурăнакан граждансем пурнăçăн мĕн пур прависемне тулли усă кураççĕ. Ку—пирĕн чăнлăх, тĕрĕслĕх. Ку чăнлăха пирĕн аслă тăван çĕршывăн кашни кĕтесĕнчех курма пулат.

Тури Ачак колхозĕн фермă хуралçи Иванов Паким та пайан çĕнĕ Конституци тивлечĕсемпе ытти колхозниксемпе пĕр танах усă курат. Колхоз ăна хăйне май ĕç тупса панă. Вăл ĕçлет, канат, аслă Октăбĕр уйавĕпе Аслă Совета суйламали куна пĕтĕм колхоз йышĕпе пĕрле савăнăçлăн кĕтсе илет.

Нумайччен калаçса лартăмăр епĕр. Кĕрхи кун каç йеннеле сулăнчĕ. Тулта пирĕн „Пушка", пире кĕтсе ывăннипе çĕр чавма пуçланипе илтсен, епĕр тухрăмăр. Иван Семеныч ăйăра ачашлакалаçа кил йеннеле çавăрчĕ.

Строителĕн кăмăлĕ

Колхоза кĕрсессĕн малтанах пĕр çултăлăк хушши епĕ уйхирĕç бригадирĕ пулса ĕçлерĕм. Унтан правлени мана строителсен бригадине куçарчĕ. Строителсен бригадирĕ пулса вара 1935 çулччене ĕçлерĕм. Çак хушăра епĕр колхозри мĕн пур пысăк строителствăсене ĕлкĕртĕмĕр. Пысăк клуб, лаша тата ĕне витисем, фермă сарайĕ, пăру вити, правлени çуртĕ—çаксене пĕтĕмпех епĕр хамăр алпа тунă. Икре хресченсене паллă: хуаллупа тунă йапала—хăвăншăн хаклă та сывăх, тивлетлĕ те тăван. Хамăн алпа тунă колхоз халљ маншăн тăван килрен те сывăх пулса тăчĕ.

Мĕн курнă епĕр ĕлĕк? Пирĕн семйере 7 çын пулнă. Çак 7 çынна 1 йат çĕре тивнĕ. Пĕр йат çĕртеп епĕр çулсерен 20—25 пăт тырă пухса кĕнĕ. Пурăннă вара çак пĕр йĕкĕрывăçлăх тырра шĕкĕлчесе. Çур хĕлтен А. Гаврилов кулак патне кивçене кайнă. Атте йалсем тăрăх çĕвĕ çĕлесе çÿренĕ. Анчах кивçене кайса та, йалсем тăрăх ĕçлесе çÿресе те, епĕр тăранмалăх çăкăр туса курман.

Колхоз нушаран хăтарчĕ. Колхозри тĕп çурт-йĕрсене туса пĕтерсен, правлени мана аслă коњуха куçарчĕ, унтан вăра кăçалхи июнь уйăхĕнчен пуçласа, ĕне фермин пуçлăхĕ турĕ. Ĕçсем ăнăçлă пыраççĕ. Пурнăç çителĕклĕ, малали ĕмĕтсем пысăк.

П. Д. Краснов,

фермă заведуйушчийĕ.

Арк. Ĕçхĕл

Халăх ĕçĕнче ÿснĕ çын

Çулахи каççем ахаљ те тĕттĕмех пулмаççĕ. Çавăнтах тата, есĕ вăрманпа иртсе пынă чух, санăн каçхи çулна ырă шăпчăксем йурласа хавхалантараççĕ, лаштра çулçăлă йăвăç тĕмисем айĕнчен çутă хуртсем хăйсен пĕчĕкçĕ фосфăр хунарĕсемпе çутатаççĕ.

Халĕ ак кĕркунне пуçланчĕ. Кĕрхи каççем тарăн та тĕттĕм. Пĕр картрав вĕçерĕнсе кайса ерни-ернипе кĕрлекен каскăн çил час-часах йурлă-пăрлă çăмăр кăларат. Йал варринчи ватă йăмрасем кун пек чух, тымартан тăпăлса тухас пек, авăна-авăна шавлаççĕ. Вăрман пĕр чарăнмасăр тулхăрса тăрат. Ашăхсăр тĕттĕм!

Çакăн пек тĕттĕм каçа шанма йурамаст. Колхоз хуçалăхĕ пысăк. Йалтан 3—4 çухрăмри Утар çырминче—колхозăн пысăк утарĕ. Çутуй çырми пуçĕнчи вăрманта—çулахи ĕне карти. Колхоз çăва тухçанах фермăри ĕнесене çакăнта кăларат те, мĕн хĕле кĕричченех усрат. „Çулахи лагĕр", теççĕ ăна. Йалăн анат вĕçĕнче—пĕр лаша вити, тура—çиларманĕсем, лаша витипе ĕне витисем, тырпулпа тулнă кĕлтесем, çăм арманĕпе машин сарайĕсем. Куç çивчĕ пулмала, пурне те сыхă тытмала.

Колхоз председателĕ Андрей Михайлович Краснов пур çĕре те çирĕп хурал тăратнă. Хуралçăсене хайар та шанчăклă йытăсем панă. Кунсăр пуçне правлени членĕсем кашни каç улшулăн дежур тăраççĕ. Вĕсем çĕрхута мĕн пур постсене, хуралçăсене тĕрĕслеççĕ. Çĕрхутах инçетри утарпа фермăн „çулахи лагĕрне" те çитеççĕ. Сисĕмлĕх! Ытла нумайах пулмаст йалтан Долгов, Можайкин, Кондукторов кулаксене тăпăлтарса кăларчĕç. Анчах вĕсен тымарĕçем пĕтмен-ха. Кĕрхи каççем тарăн та тĕттĕм.

Андрей Михайлович час-часах пĕр ыйăх çывăрса вăрансан, кĕрхи аскăн çил урам тăрăх кĕрлесе чупнине итлесе выртат. Час-часах вăл хăвăрттăн тумланса, хуралçăсене пăхма тухса кайат. Пысăк мар, çăмăл шăмшаклă Краснов пĕр постран тепĕр поста çитет—хытарат, хÿтерет, тĕрĕслет.

— Сыхлăх! Сисĕмлĕх!..

А. М. Краснов кулаксен хайарлăхне хăй çурăмĕ çинче тÿссе иртернĕ. 1929 çул. Йалта колхоз хÿмĕ тапранса кайат. Краснов—Тури Ачак йалсовет председателĕ. Государствă тырпул хатĕрлет. Краснов — йалти тырпул хатĕрлев комиççин председателĕ. Кулаксем урса кайса хирĕç сикеççĕ. Андрей Михайлович кулаксене çирĕп алăпа тыткалат. Тăшман çиллине шăнараймаст. Пĕринче çапла хатĕрлев комиççин шавлă ларуви хыççăн, Андрей Михайлович çĕрле, икĕ сехетре киле çитсе, саланса выртат кăна, чÿрече кантăкĕнчен çулăм йалкăшни курăнса кайат. Красновсен çуртне вут тивретнĕ. Ĕмĕр хушшинче пухнă кил çурт кĕл пулса йулат. Анчах Красновăн чĕри çемçелмест, вăл çак кунтан ĕмĕрлĕхех хурçă пулса тăрат.

Акă вăл халљ—орденлă çын, А. М. Краснов, халăх пулăхĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн ирне-каçне, çилтăман-çăмăрне пăхмасăр, хăйĕн çамрăк чĕрипе çулăм пек хыпăнса çÿрет. Андрей Михайлович халăх аллипе тунă пурлăха мĕн çамрăкранах сыхăххăн хисепleме вĕреннĕ. Вăл мĕн çамрăкранах халăх ĕçĕнче, обществăлă ĕçре ÿснĕ.

Вунтăватă çул хушши комсомолта тăни ăна ĕмĕр сÿнми пурнăç кăварĕ пачĕ. Краснов йулташ — 1926 çулччен — волкомол секретарĕ. 1926 çулта ăна, çирĕм çулхи хĕрÿлĕ йĕкĕте, Ачак йалçыннисем йалсовет председателне суйлаççĕ. Вăл кунта виçĕ çул ытла ĕçлесе, государствă ĕçĕн наукипе искусствине тĕплĕн вĕренет. Унтан Краснов — рабочисем хушшинче. Вăл Йетĕрнери спирт заводĕнче малтан — производствă заведуйушчийĕ, унтан—1932—1933 çулсенче партком секретарĕ. Партине вăл 1931 çулта кĕнĕ. Заводран районри парти организацийĕ Краснов йулташа татах йалта ĕçлеме мобилизацилет. 1933—34 çулсенче, вăл — Шăмат йалсоветĕн председателĕ. 1934 çулхи çуркунне ăпа Тури Ачакри йухăна пуçланă колхоза çирĕплетме йараççĕ. Унтанпа акă тăваттăмĕш çул ĕнтĕ вăл „Крестьянская газета" колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Пур йенĕпе те кăтартулă ĕçленĕшĕн, тырпул тухăçлăхне рекордлă хăпартса пынăшăн Совет правителствине А. М. Краснов йулташа 1935 çулăн йулашки кунĕсенче Совет Сойузĕн чаплă ордĕнне пачĕ. Унтанпа Краснов çак икĕ çул хушшинче тата пысăкрах çитĕнÿсем турĕ.

Чăваш халăхĕн хайар тăшманĕсем — буржуалă националиссем— елменевцăсем чăваш халăхĕн кунçулне, чăвашсен çĕршывĕсене, ани-çаранĕсене йаланах хура тĕтĕрепе хупăрлама хăтланнă. Чăвашсен чуллă, çырма-çатралă çĕрĕсем çинче нимĕнле пурнăç та пулмаст, чăваш çĕрĕсене хĕвелтухăçĕпе хĕвеланăç йеннеле сармала, тесе сÿпĕлтетнĕ вĕсем.

Анчах пултарулă та паттăр чăваш халăхĕ аслă вырăс пролетарикачĕ пулăшнипе, Ленин — Сталин партийĕ йертсе пынипе кивĕ самана хĕнхурĕнчен — капиталиссемпе помещиксен пусмăрĕнчен тухса, çирĕм çул хушши пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле паттăрăн ĕçлесе пычĕ, хăйĕн республикине пуйан та културăлă республикă туса çитĕнтерчĕ. Буржуалă националиссен махинацийĕсем çăва тĕпнеле ÿпĕнчĕç.

Республикăри кашни кĕтес пайан тулли пурнăçпа пурăнат. Акă епĕр Тури Ачак уйхирĕсемпе иртсе пыратпăр. Чăн та, вĕсем тикĕсех мар. Пĕтĕм тикĕс çĕрсем кунта ĕлĕк Долгов, Можайкин кулаксен аллинче пулнă. Чухăнсем хăйарлă, тăмлă çĕрсем çинче чаваланнă. Анчах темĕн чухлĕ чавалансан та теçетинран 40—50 пăтран ытла тырă туса илеймен.

Организациленчĕ йалта колхоз. Колхозниксем кулаксене çĕр çинчен шăлса пăрахрĕç. Совет государстви çĕре ĕмĕрлĕхех колхоза çирĕплетсе пачĕ. Колхозниксем çĕрĕн пултарулăхне тĕпрен хускатса çĕкле пуçларĕç. Çĕр ĕмĕрхи йăвăр ыйхăран вăранчĕ, колхоза тĕлĕнмеле пуйан тупăшсем пара пуçларĕ. „Тикĕсмар", „çырма-çатралă" çĕр, колхозниксем тăватă çул хушши тимлĕн ĕçленипе, пилĕкĕмĕш çулĕнче — 1935 çулта гектартан тĕштырă вăтам шутпа 16,8 центнер пачĕ. Нихăçан пулман, нихăçан кĕтмен тупăш! Совет правителстви колхоза пысăк наградăпа паллă турĕ — колхоз председателне А. М. Краснова ССР Сойузĕн ордĕнне пачĕ.

Колхоз агротехникăна 1934 çултанпа уйрăмах сарлакан ĕçе кÿрте пуçланă. Унтанпа Тури Ачак хирĕсене темиçе пиншер лав тислĕк, торф, темиçе çĕршер лав фекали, минералсем, кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕсем тухрĕç. Ĕмĕр выçă пурăннă çĕрсем тулли çимĕçпе тулчĕç. Колхозăн пĕтĕм акма йурăхлă çĕрĕ 500 гектар. Иртнĕ çулхи çанталăк 1921 çулхинчен пĕре те ыра пулман, çапах та колхоз иртнĕ çулта тĕштырă гектартан вăтам шутпа 15,80 центнер туса илчĕ.

Колхозăн халљ тислĕк йе ытти им-çам курман çĕр çукпа пĕрех. Колхозниксем агротехникăн пур майĕсемпе те туллин усă курма тăрăшаççĕ. Вăрлăхсене триумф-трийерсемпе тасатнисĕр пуçне, мĕн вăй çитнĕ таран алăпа пĕрер пĕрчĕн суйлаççĕ. Тулă, сĕлĕ, пăрçа вăрлăхĕсене çулсерен йаровизаци туса акаççĕ. Мулчировани, бионтизаци, кĕрхи калчасене çуркунне тăрантарни, йур тытни (йур тытма кунта 6.500 щит хатĕрлесе хунă),— çаксем пурте çĕрĕн пултарулăхне çулăмлăн хăпартаççĕ. Колхоз кăçалхи çул гектартан тĕштырă 22-шер центнер илчĕ. Ытларах та илме пулатчĕ, анчах чылай участкăсенче тырă ÿкни чылай кансĕрлерĕ.

Ку инкекрен сыхланас тесе, колхоз çитес çул химизаци тума палăртат—тăпрана тырă хăмăлне çирĕплетмели йапаласемпе ĕмеллесе сиплеме шутлат.

Çапла вăраннă Тури Ачак çĕрĕсем ĕлĕкхи 40—50 пăт вырăнне гектартан тĕштырă вăтам шутпа 120—150 пăт параççĕ (кĕрхи тулă кăçал 150 пăт ытларах тухнă).

Пуйан та тулăх пурнăçпа кĕтсе илеççĕ Ачак колхозникĕсем Октăбĕрĕн 20-мĕш уйавне тата Аслă Совета суйлас куна. Ĕлĕк, патша саманинче, выçăлатутăла пурăннă ĕçхресченĕсем кăçал темиçе çĕршер пăт тĕштырă илеççĕ. Ĕçкунĕ кăçал çур пăт тайат. Колхозниксем пÿрт-çуртсем çавăраççĕ, паха йапаласем нумай туйанаççĕ. Кăçал кăна йалта 13 колхозник çĕнĕ пÿрт лартнă. Пысăк çитменлĕх—кооперации начар ĕçлени. Йалпо халљхи вăхăтра колхозниксем ыйтнин чĕрĕкне те кÿрсе памаст. Колхозниксем çĕвçĕлемели машинăсем, велосипедсем, сехетсем, патефонсем, пысăк трÿмосем, тĕрлĕ йышши чечек вăрлăхĕсем, пурçăн таварсем, шукăљ çипуçсем, гармонисем, лайăх кĕнекесем ыйтаççĕ.

Колхоз çамрăкĕсем уйрăмах нумай ыйтаççĕ. Вĕсем хулари пек тумланасшăн, вĕренесшĕн, куљтурăлă пуласшăн. Колхозра пысăк клуб пур, клубра хор тата драмă кружокĕсем ĕçлеççĕ. Анчах ĕçсен çĕнĕ пйесăсем, чăвашла çĕнĕ йурăсем сукки чăрмантарат.

— Мĕн ĕçлеççĕ çав чăваш писателĕсемпе поечĕсем? — тет клуб пуçлăхĕ И. Васийлĕв — комсомолец, йурăçти, купăсçă.

Çавнах ыйтат орденоносец А. М. Краснов та. Унăн библиотекинче халљ Ленин тата Сталин сочиненийĕсем пĕтĕмĕшпех пур. Пысăк вырăн йышăннă библиотекăра агротехникă литератури, анчах илемлĕ литературă çителĕксĕр. Тупма та ăна сывăхра нисра та çук.

А. М. Краснов бољшевисăма тата агротехникăна куллен вĕренсе пырат. Вăл кашни кун. пĕр сиктермесĕр, кăнтăрла 12 сехетрен пуçласа 2 сехетчен, кĕнекепе тетрат тытса ларат, вĕренет. Ку йĕрке ун вара нихăçан та пăсăлмаст. Мĕншĕн тесен Краснова парти çапла тимлĕн вĕренме хушат.

Андрей Михайлович — парти Чăваш Обкомĕпе комсомол Обкомĕн членĕ, партин Йетĕрне райкомĕн членĕ, комсомолта 14 çул, партире 6 çул хушши тăрса нихăçан йенчен те нимĕнле айăпа кĕмен скер, колхоз ĕçĕнче йалта парти линине çирĕп тытса пырат. Вăл комсомолецсене бољшевисăма вĕренме пулăшат, йалта чăн-чăн агитатăр пулса ĕçлет.

Аслă Совета суйламали Положенине вĕренес тĕлĕшпе малтанах колхоз активĕн кĕске вăхăтлăх курсĕ пулса иртрĕ. Кунта 20 çын вĕренчĕ. Халĕ, йалта пилĕк килпеле пĕр кружок организациленĕ. Вăл кружоксене актив шкулĕнче вĕренсе тухнă агитатăрсем йертсе пыраççĕ. Демократисăм мĕн пур талккишпех çĕкленет. Ĕмĕр тĕпел кукринче пурăннă хĕрарăмсем пайан государствă ĕçне тытса пыма вĕренеççĕ.

Çĕнĕрен-çĕнĕ пултарулăхпа çĕкленсе пырат пирĕн чăваш халăхĕ. Орденоносец А. М. Краснов—чăваш халăхĕн мухтавлă та чаплă ывăљ-хĕрĕсенчен пĕри, пайан Аслă Октăбĕр уйавĕ умĕн, пире пулас агрохула планĕсемпе паллаштарат:

— Çакăнта, Урпаш шывĕ çинче, пысăк арман лартатпăр. Арман йала електро-çутă паракан пулат. Лере вăрман сывăхне кану çурчĕ лартатпăр. Йал варринче ватă колхозникĕсем пурăнмали çурт пулат. Клуб çуртне лайăхлататпăр. Кашни колхозник пÿртне радио кÿртетпĕр. Пурте пулат.

Халăх ĕçĕнче ÿссе çитĕннĕ çынăн сăмахне епĕр ĕненетпĕр, шанатпăр.

Тури Ачак, Йетĕрне р.

Армени ĕççыннисем Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Сталин йулташăн тата унăн чи çывăх соратникĕсен кандидатурисене тăратаççĕ

ЕРЕВАҪ, 23-X. (ТАСС). Сойуз Совечĕн депутачĕсем пулма халăхсен йуратнă çулпуçĕн Сталин йулташăн тата унăн чи çывăх соратникĕсен Молотов, Калинин, Жданов йулташсен кандидатурине тăратнă Мускаври тата Ленинградри предприйатисенчи суйлав умĕнхи пухусем çинчен пĕлтернине Советлă Армени хуласенче, колхозсенче тата иммигрантсен поçолкисенче хĕрÿллĕн кĕтсе илнĕ.

Ĕнер Ереванре, Ленинаканра тата республикăн хăшпĕр районĕсенче ĕççынниксен нумай çынлă пухувĕсем пулса иртнĕ.

Çав пухусем Армени рабочисем, колхозниксем тата совет интеллигенцийĕ коммунисен партине йуратнă çулпуçа Сталин йулташа вĕçĕ-хĕррисĕр парăннине тата йуратнине кăтартакан хăватлă демонстраци пулса тăнă.

Синтетически каучук комбиначĕн строительствинчи рабочисен виççĕ пинлĕ коллективĕн пухуvĕ пысăк пуçарулăхна иртнĕ. Тухса калакан стахановец Баграт Татевосан Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Ереван суйлав округĕнчен Сталин йулташ кандидатурине тăратма сĕннĕ.

Ку сĕнÿве тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Пухура пулнисем Сталин йулташран Ереван суйлав округĕ тăрăх баллотировкăра пулма килĕшме ыйтас тесе йышăннă.

Канакарти Гидроцентраль строителĕсем Ереван округĕнчен Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Аслă Сталинăн чи çывăх соратникĕн—Молотов йулташăн кандидатурине пĕр саслăн тăратнă.

Çĕвĕ çĕлекен фабрикăри стахановец Хагин Степаҫан сĕннипе швейниксем Оборонă Халăх Комиссарĕн Совет Сойузĕн пĕрремĕш маршалĕн Ворошилов йулташăн кандидатурине тăртнă. Ленинаканри чукунçул работникĕсем тата Ереванри трамвай рабочийĕсем Сталинăн чи çывăх соратникĕнчен—Л. М. Кагановичран Ереван округĕнчен Сойуз Совечĕн депутатне суйланма баллотировкăра пулма килĕшÿ ыйтас тесе йышăннă. Ереванри конçерв завочĕн коллективĕ, Ерджаник Маркарйан стахановкă сĕннипе, Микойан йулташ кандидатурине тăратнă.

Ереванри чукунçул работникĕсем Ереван округĕнчен Сойуз Совечĕн депутатне суйланма баллотировкăра пулма Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн мухтавлă руководителĕнчен Пежов йулташран килĕшÿ нама ыйтас тесе пĕр саслăн йышăннă.

Ереванри çу-çупаҫ комбиначĕн рабочийĕсем, инженерĕсем тата служăщийĕсем Совет Сойузĕн маршалĕн Буденный йулташăн кандидатурине тăратнă. Ереванри университет студенчĕсемпе профессорĕсем Совет Сойузĕн Геройĕнчен, мухтавлă летчик Валерий Чкаловран Ереван округĕнче баллотировкăра пулма килĕшме ыйтас тесе йышăннă.

Климент Йефремович Ворошилов кандидатуришĕн

МИНСК, 23-X. (ТАСС). Хулари пултра предприйатисенче, учрежденисенче, шкулсенче, çар чаçĕсенче суйлав умĕнхи пухусем пулса иртнĕ.

Ворошилов йачĕпе тăракан станоксем тăвакан заводри рабочисен, специалисен, служăщисен коллективĕн пухувĕнче ултçĕр çын ытла пулнă. Чи малтан заводри ватă рабочи, литейнăй цех маçтăрĕ Лоскат сăмах илнĕ. Вăл çапла калать:

— Пирĕнтен кашнийĕх хăйĕн сассине, хамăран тăван Сталиншăн парасшăн çунать, унăн йачĕпе пирĕн мĕн пур çĕнтерÿсем, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç сыхăнса тăрать. Пирĕнтен кашнийĕх хăйĕн сассине Сталин йулташăн чи çывăх соратникĕсемшĕн парасшăн çунать, вĕсем Сталинпа алла алăн тăрса пирĕн çĕршыва çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ патне илсе пыраççĕ. Ĕнĕ Минск хулинчи суйлав округĕнчен хамăр заводри рабочисенчен, служăщисенчен, инженерсемпе техниксенчен Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Климент Йефремович Ворошилов кандидатурине тăратма сĕнетĕп. ПСК(б)П Тĕпкомĕ тата Сталин йулташ йертсе пынипе Оборонă хÿрçă Наркомĕ Хĕрлĕ çарапикам çапса аркатаймик хăрушă вăй туса хучĕ. Ворошилов йулташ пирĕн округран Сойуз Советне суйланма баллотировкăра пулма килĕшÿ парсан, пирĕншĕн пысăк чыс пулать.

Пухура пулнисем пурте тăраççĕ, тăвăллăн алă çупнине тата урра кăшкăрнине çак сĕнÿве саламлаççĕ.

Стахановец комсомолец Естеркин, инженер Бройде тата комсомолкă Волотовскайа йулташсем тухса каланă хыççăн, пухура пулнисем халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ тата Оборонă халăх комиссарĕ Ворошилов йулташ патне саламлă çыру йама пĕр саслăн йышăннă.

Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Ворошилов йулташ кандидатурине тăратасси çинчен пĕр саслăн резолюци йышăннă.

Заводран округри суйлав умĕнхи канашлува йама тăвата представител суйласа хăварнă. Вĕсене рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ çарĕн мухтавлă полководецĕн К. Пе. Ворошиловăн кандидатуришĕн тăма хушнă.

Сойуз Совечĕн депутачĕ пулма Ворошилов йулташ кандидатурине тăратасси çинчен çавăн пекех тата „Большевик" тир-сăран завочĕн рабочийĕсемпе служăщийĕсем те резолюци йышăннă.

Çар чаçĕсен пухувĕсенче боецсем, командирсем тата политработниксем сăмах тухса каланă, хăйсен сăмахĕсенче вĕсем Ленин—Сталин партине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа, хурçă полководеца Оборонă Наркомне Ворошилов йулташа вĕçĕ-хĕррисĕр йуратнине кăтартнă.

Пуху Ворошилов йулташран Минск суйлав округĕнчен Сойуз Совечĕн депутатне суйланма баллотировкăра пулма килĕшме ыйтса пĕр саслăн резолюци йышăннă. Пуху пысăк çĕкленÿпе Сталин тата Ворошилов йулташсем патне саламлă телеграммăсем йанă.

Совет Сойузĕн маршалне В. К. Блюхер йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратаççĕ

ХАБАРОВСК, октабĕрĕн 24-мĕшĕ. Амур çинчи Хĕрлĕ йалавлă флотилире суйлав умĕнхи пухусем пысăк çĕкленÿпе иртеççĕ. Флотилири бойецсем тата командирсем пурте пĕр кăмăлпа хавасланса, Мускаври тата Ленинградри ĕççыннисем Сойуз Советне депутата суйлама халăхсен аслă çулпуçне Сталин йулташа тата унăн шанчăклă соратникĕсене—Молотов, Кагановичи, Ворошилов, Жданов, Калинин йулташсене кандидата тăратнине ырлаççĕ.

№-ски чаçри бойецсемпе командирсем йышăннă резолюцире çапла çыраççĕ:

„Пирĕн подразделенин личнăй составĕ, Сойуз Советне депутата суйлама Сталин, Молотов, Кагановичи, Ворошилов, Калинин, Жданов йулташсене тата Ленинград хулинчи чи лайăх стахановеца—Сметанин йулташа кандидата тăратнă Мускаври тата Ленинградри рабочисен сасси çумне пĕрлешеççĕ.

Подразделенин личнăй составĕ, Хĕрлĕ çарăн чи лайăх полководцисенчен пĕрине, большевиксен партин шанчăклă ывăлне, Совет Сойузĕн маршалне Василий Константинович Блюхер йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратать".

* * *

ХАРЬКОВ, октабĕрĕн 24-мĕшĕ. Харьковри трактăр заводĕнчи вунă пин çынлă коллектив Сойуз Советне депутата суйлама кандидатурăсем тăратма тата кандидатурăсене сÿтсе-йавма пухăннă. Пухура чи малтан литейнăй цех маçтăрĕ Копачевски сăмах илнĕ. Вăл заводри чи лайăх стахановецсенчен пĕрине—Николай Филиппович Колесник формовщике Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратнă.

— Колесник йулташ Ленин—Сталин ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçлет, Колесник йулташа пирĕн парти, пирĕн коллектив ÿстерсе çитĕнтерне,—тенĕ Копачевски.— Колесник пирĕн заводра стахановла йухăма пуçарса йаракансенчен пĕри. Вăл ĕç вăйне пит нумай илекен ĕçре—трактăр урапине тата рамине формоват тăвас ĕçре пĕтĕм Сойузĕпе рекорд тунă. Колесник йулташ епĕр ун çине хуракан пысăк шанчăка тивĕçлĕ пулатех.

Пухура тухса каланисем пурте мухтавлă стахановецăн—Колесник йулташăн кандидатуришĕн каланă.

Пуху:—Колесник йулташа Сойуз Советне депутата суйлама кандидата тăратас, ăна Харьков хулин Краснозаводск суйлав округĕнче баллотировкăна тăма килĕшÿ нама ыйтас, тесе йышăннă.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн командирĕсене Совет Сойуз Геройĕ йатне парасси çинчен

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ йышăннă постановлени

ССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ çапла йышăнат:

Совет Сойузĕн оборонă хăватне тĕреклетес тĕлĕшпе правительствă йатарласа панă заданисене кăтартулăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре паттăрлăх кăтартнăшăн Совет Сойуз Геройĕн йатне парас:

1. Капитана Петр Федорович Швецова.

2. Аслă лейтенанта Александр Илйич Родимцева.

3. Кĕçĕн командира Алексей Василйевич Никонова.

ССР Сойуз Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн председателĕ М. Калинин.

ССР Сойуз Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн секретарĕшĕн ССР Сойуз Тĕпĕçтăвком Президиумĕн членĕ А. Андрейĕв.

Мускав, Кремль,
1937 ç. октабĕрĕн 22-мĕш.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав участкисем çинчен

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцăсен Депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцăсен Депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕ çапла йышăнат:

„ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин" 25-мĕш, 26-мĕш, 27-мĕш, 28-мĕш, 30-мĕш тата 33-мĕш статйисем тăрăх Шупашкар хулинче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали суйлав участкисене тăвас:

1-мĕш Суйлав участки—центр 5-мĕш №-лĕ шкул (Новая урамĕ, 32-мĕш №-лĕ çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Волгострой çурчĕсене, Новая урамне, Больница переулокне, Поперечно-Новая урамне, Ленин урамне—Свердлов урамĕнчен пуçласа вĕçне çитиччен йе 18 мĕш № лĕ çуртран пуçласа 56-мĕш №-лĕ çурта тата 15-мĕш № лĕ çуртран пуçласа 47-мĕш №-лĕ çурта çити, Плеханов урамне—Заводская урамран йе 42-мĕш № лĕ çуртран пуçласа 56-ш №-лĕ çурта тата 43-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 67-мĕш № лĕ çурта çити, Володарски урамне—Заводская урамран йе 32-мĕш № лĕ çуртран пуçласа 54-мĕш №-лĕ çурта тата 29-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 51-мĕш №-лĕ çурта çити, Заводская урамне—Ленин урамĕнчен йе 13 мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 63-мĕш № лĕ çурта тата 16-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 56-мĕш № лĕ çурта çити, Герцен йачĕпе тăракан иккĕмĕш урама, Овражная иккĕмĕш урама, Овражный переулока тата Узенкий переулока.

II-мĕш Суйлав участки—центр Максим Горький йачĕпе тăракан шкул (Чувашская урамĕ, 20-мĕш №-лĕ çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Чувашская урамне—Свердлов урамĕнчен пуçласа вĕçне çити йе 25-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 69-мĕш №-лĕ çурта тата 20-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 74-мĕш №-лĕ çурта çити, Водопроводная урамне, Водосвет поçолкине, Красноармейская урамне, Безымянный переулока, Автономная, Трудовая, Односторонка урамĕсене, Заводской переулока, 1-я Овражная урамне („25-е Октября" завод йатлă пулни).

III мĕш Суйлав участки—центр хула больници (Чувашская урамĕ, 18-мĕш №-ле çурт).

Суйлав участкине кĕртес: хула больницине.

IV-мĕш Суйлав участки—центр Ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлакан институт.

Суйлав участкине кĕртес: Ача амăшĕпе ачасен сывлăхне сыхлакан института.

V-мĕш Суйлав участки — центр Чăвашторг кантурĕ (Ленин урамĕпе Заводская урамĕн кĕтесĕ 15/11-ш №-лĕ çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Свердлов урамне, Свердлов переулокне, Трубный оврага, Чернышевская урамне — Аптечная урамран йе 12-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 32-мĕш №-лĕ çурта тата 5-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 13-мĕш № лĕ çурта çити, Герцен урамне, Речной переулока, Заводская урамне—вĕçĕнчен пуçласа Ленин урамне çити йе 1-мĕш №-лĕ çуртан пуçласа 11-мĕш №-лĕ çурта тата 2-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 14-мĕш № лĕ çурта çити, Ленин урамне—Хĕрлĕ Плошчĕдрен пуçласа Свердлов урамне çити йе 2-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 16-мĕш №-лĕ çурта тата 1-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 13-мĕш №-лĕ çурта çити тата Нагорно-Чернышевская урамне.

VI-мĕш Суйлав участки—центр Кино-театăр (Чувашская урамĕпе Роза Люксембург урамĕн кĕтесĕ, 7/11-мĕш №-лĕ çурт).

Суйлав учаткине кĕртес: Хĕрлĕ плошчĕд урамне, Чĕрнышевски урамне—Союзная урамран пуçласа Аптечная урам таран йе 2-мĕш № лĕ çуртран пуçласа 10-мĕш №-лĕ çурта тата 1-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 3-мĕш №-лĕ çурта çити, Аптечная, Канашская урамсене, Чувашская урамне—Союзная урамран пуçласа Свердлов урамне çити йе 1-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 23-мĕш №-лĕ çурта тата 2-мĕш №-лĕ çуртран пуçласа 16-мĕш №-лĕ çурта çити, Союзная, Перевозная урамĕсене, Набережная Волги урамне—вĕçĕнчен пуçласа Чебоксарка çырмине çити, Роза Люксембург, Театральная урамĕсене тата Пристăнь переулокне.

VII-мĕш Суйлав участки—центр Чăваш Чăптасойузĕн çурчĕ (Кадыков тата Октябрьская урамĕсен кĕтесĕ, 7/17-мĕш № лĕ çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Нагорная, Поперечно-Нагорная урамĕсене, Кувшинский переулока, Кадыков урамне—Хĕрлĕ плошчĕдрен пуçласа вĕçне çити, Октябрьская, Луговая урамĕсене, Халтурин переулокне, Слесарный оврага, Максим Горьки, Карл Либкнехт, Гоголь урамĕсене, Горный переулока, Набережная Волги урамне—Чебоксарка çырминчен пуçласа вĕçне çити, Рыбацкая слободана, Йавăç заводне, „Хресчен" завода, Нефт складне, Радиостанцине, Заготзерон тырă илекен пунктне, Маслопромăн холодильникне тата Шупашкарти Торгăн овощчехранилищчине.

VIII-мĕш Суйлав участки—центр партстационар (Чувашская урамĕ, 8-мĕш №-лĕ çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Туберкулез диспансĕрне тата Поликлиникăна.

IX-мĕш Суйлав участки—центр Крупскайа йачĕпе тăракан шкул (Калинин урамĕ, 17-мĕш № çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Калинин урамне, Садовый переулока, Енгельс, Комсомол урамсене, Шупашкар урамне, Детский переулока тата Кайбулка хĕрринчи урама—Октабĕр урамĕнчен пуçласа вĕçне çити.

X-мĕш Суйлав участки—центр Пичет çурчĕ (Володарский тата Йарославский урамĕсен кĕтесĕ, 26/5 № çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Йарославски урамне—Кадыков урамĕнчен пуçласа Дзержинский урамне çити—1-мĕш № çуртран 41-мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртан 34-мĕш № çурта çити, Карл Маркс урамне—Хĕрлĕ плошчĕдрен Дзержински урамне çити—1-мĕш № çуртран 27-мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртран 34-мĕш № çурта çити, Плеханов урамне—Кайбулка çырминчен Ленинградски урамне çити—2 мĕш № çуртран пуçласа 22-мĕш № çурта çити тата 1-мĕш № çуртран пуçласа 23-мĕш № çурта çити, Типографи переулокне, Володарски урамне—Кайбулка çырминчен пуçласа Ленинград урамне çити—2-мĕш № çуртран пуçласа 16-мĕш № çурта çити тата 1-мĕш № çуртран пуçласа 15-мĕш № çурта çити, Марат переулокне—Дзержински урамĕнчен пуçласа Ленинград урамне çити—1-мĕш № çуртран пуçласа 25-мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртран пуçласа 26-мĕш № çурт çити.

XI-мĕш Суйлав участки—центр 6-мĕш № „Çĕнĕ шкул" (Ленинград тата Володарски урамĕсен кĕтесĕ, 24-мĕш № çурт).

Суйлав участине кĕртес: Ленинград урамне—Хĕрлĕ плошчĕдрен пуçласа Дзержински урамне çити—1-мĕш № çуртран пуçласа 29-мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртран пуçласа 32-мĕш № çурта çити, Урицки урамне—Плеханов урамĕнчен пуçласа Дзержински урамне çити—1-мĕш № çуртран пуçласа 29 мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртран пуçласа 39-мĕш № çурта çити, Шкул переулокне, Ворошилов урамне—Глухой переулок таран—1-мĕш № çуртран пуçласа 41-мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртран пуçласа 38-мĕш № çурта çити, Плеханов урамне—Ленинград урамĕнчен Заводской урамне çити—24-мĕш № çуртран пуçласа 40-мĕш çурта çити тата 25-мĕш № çуртран пуçласа 41-мĕш № çурта çити, Володарски урамне—Ленинградски урамĕнчен Заводская урамне çити, 18-мĕш çуртран пуçласа 30-мĕш çурта çити тата 17-мĕш çуртран пуçласа 27-мĕш çурта çити, Дзержински урамне—Ленинград урамĕнчен Урицкий урамне çити—27-мĕш № çуртран 29-мĕш № çурта çити тата 28-мĕш № çуртран пуçласа 30-мĕш çурта çити.

XII-мĕш Суйлав участки—центр Строителсен клубĕ (Ленинград урамĕ, 38-мĕш № çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Кузнечная урамне — Ленинград урамĕнчен пуçласа вĕçне çити (бараксем тата Стройтрест çурчĕ), Ворошилов урамне — Глухой переулокран пуçласа вĕçне çити — 48-мĕш № çуртран пуçласа 69-ш № çурта çити тата 40-мĕш № çуртран 48-ш № çурта çити, Односторонка Горшечнайана, Урицкий урамне — Дзержински урамĕнчен пуçласа вĕçне çити — 31-мĕш № çуртран пуçласа 39-мĕш № çурта çити тата 36-мĕш № çуртран пуçласа 58-мĕш № çурта çити, Ленинград урамне — Дзержински урамĕнчен пуçласа вĕçне çити —31-ш № çуртран 57 мĕш № çурта çити тата 34-мĕш № çуртран пуçласа 44-мĕш № çурта çити тата Военный городока.

XIII-мĕш Суйлав участки — центр копператив техникумĕ (Карл Маркс урамĕ, 80-мĕш № çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Рабочи поçолăка, Спорт урамне, Карл Маркс урамне — Дзержински урамĕнчен пуçласа вĕçне çити —29-ш № çуртран пуçласа 67-мĕш № çурта çити тата 36-ш № çуртран 80 ш çурта çити, Йарославски урамне—Дзержински урамĕнчен пуçласа вĕçне çити — 43-мĕш № çуртран пуçласа 63-мĕш № çурта тата 36-мĕш çуртран пуçласа 70 мĕш № çурта çити, Кузнечная урамне — Йарославски урамĕнчен пуçласа Ленинград урамне çити — 1-мĕш № çуртран пуçласа 13-мĕш № çурта çити тата 2-мĕш № çуртран пуçласа 14-мĕш № çурта çити, Кооператив урамне.

XIV-мĕш Суйлав участки — центр 4-мĕш № шкул (Кузнечная тата Йарославски урамĕсен кĕтесĕ, 34-мĕш № çурт).

Суйлав участкине кĕртес: Чапайев поçолăкне — унта кĕрекен урамсемпе, Колхозная, Байдуков, Пионер, Чапайев, Йармарочная, Пушкин, Студенческая, Белинская, Базарная тата Майаковский урамĕсене.

XV-мĕш Суйлав участки — центр Садвинтрест совхозĕн кантурĕ (Коммунальная слобода).

Суйлав участкине кĕртес: Коммунальная слобода урамне, Киров поçолăкне тата Совхозная урамне.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцăсен Депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ Каплин.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцăсен Депутачĕсен Шупашкар хули Совечĕн секретарĕ Барабанов.

Шупашкар хули.
1937 ç. октабĕрĕн 25-мĕш.

Радио ĕçне хакламан колхозра

ЙЕЛЧĔК. Иртнĕ çулта Кивĕ-Ейпеçри „Канаш" колхоз вулав çуртне колхозниксем пухăнса радио итлеччĕç. Анчах радио итлесси нумайа пыраймарĕ, лампă тата питанисем пĕтнипе радио сÿнсе ларчĕ. Апла пулсан та радио ĕçне йĕркелесси — прийомник вальли лампăсем, питанисем илсе парасси çинчен колхоз правленийĕ те, йалсовет та нимĕн те асăнмаççĕ. Акă халĕ çĕршыв ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленет, кашни каçах тĕрлĕрен лекцисем, концертсем параççĕ, радиопа йурăсем йурлама вĕрентеççĕ. Çаксене пурне те колхозниксем итлесшĕн, вĕренесшĕн т. ыт. Анчах та радио ĕçне хакламан колхоз председателĕ Йаковлев Й. колхозниксен ыйтăвĕ çине çаврăнса та пăхмасть.

Гер. Иванов.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Критикăпа самокритикăна хĕсет"

Редакцине килнĕ çырура Вăрмар районĕнчи „Трактор" колхоз председателĕ В. Романов колхозри çитмĕнлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсем çинчен кăтартса паракан колхозниксене хĕсни, колхозра критикăпа самокритикăна путарни тата ыттисем çинчен çырса пĕлтернĕччĕ.

ПСК(б)П Вăрмар райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, ку заметкă тĕрĕс пулнă. Парти райкомĕнче В. Романова йатлана, колхозри çитмĕнлĕхсене пĕтерме хушнă.

Петрова айăпласа уголовнăй ĕç пуçарнă

Лапра Кушкă йалсоветне кĕрекен „Шумашар" колхоз (Çĕрпÿ р.) иртнĕ çулсенче начарах ĕçлесе пыман. Кăçал колхоз председателĕнче К. Петров ĕçлеме тытăннăранпа, колхоз кунран кун начар ĕçлесе пыма тытăнчĕ. 1934 çулта Петров колхозра ирсĕр ĕçсем тунăшăн колхозниксен пухăвĕ колхоз председателĕнчен, колхозран каларнă. Кăçал Петрова колхозниксем колхоз председателне суйлассăн пулман пулсан та, йалсовет председателĕ Перлов пулăшнипе Петров татах председателе суйланать. Кун хыççăн вара Петров колхоза салатма, йухăнтарма тытăнать, колхозниксем хушшинче контрреволюцилĕ агитаци сарать, колхозниксенчен мăшкăласа кулать. Петровăн ирсĕрле ĕçĕсем темĕн чухлех, тесе çырать Ф. Йалкор.

Ку заметкăна „Чăваш Коммунĕ" хаçат редакцийĕ тĕрĕслеме Çĕрпÿ районĕн прокурорĕ патне йанăччĕ. Кун пирки Çĕрпÿ районĕн прокурорĕ çапла пĕлтерчĕ: „Заметкă тĕрĕс пулчĕ, Петрова айăпласа уголовнăй ĕç пуçарчĕ".

Выставкă валли експонатсем тăратма пуçларĕç

ЙЕПРЕÇ. Çак кунсенче районри йалхуçалăх выставки пулса иртмелле. Выставкăна лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе выставкă комиççийĕ тăрăшса ĕçлет. Выставкăра пулма тивĕç паракан показателсене кашни колхоза çитернĕ. Кунсăр пуçне районри „Колхоз пурнăçĕ" хаçат çине пичетлесе кăларнă.

Малта пыракан колхозсем районри йалхуçалăх выставкине вăйа хурса хатĕрленеççĕ. Выставкă валли експонатсене „Шурăмпуç", „Тымар", т. ыт. колхозсем тăратнă. Вĕсем хушшинче паха тĕслĕхсем кăтартакан експонатсем пур.

„Шурăмпуç" колхозĕнчи 4-мĕш бригада (бригадир Павлов) выставкăна илсе пынă сĕлĕпе сурхи тулă експонатĕнчен çакна курма пулать: кĕрхи çĕртмене вăхăтра, 20 сантиметр тарăнĕш сухаланă, „Диппе" текен суртлă сĕлĕ вăрлăхне трийерпа суртласа, емеллесе, трактăрлă сейалкăпа акнă. Кашни гектар çине 2 центнер фосфорит, 2 центнер кĕл сапнă. Çакăн пек агротехниклă ĕçсене туса ирттернипе, сĕлĕ тухăçĕ пĕр гектартан 26 центнер тухнă.

Çурхи тулă 16,6 гектар акнă пулнă. Сухалассă 20 сантиметр тарăнĕш сухаланă. Вăрлăхне „АБ" текен емелпе çуса сейалкăпа акнă, 6 гектарне йаровизацилесе акнă. Кашни гектара 1,6 центнер вăрлăх кÿртнĕ. Кашни гектар çине 18 тоннă торф тăкса çемçетнĕ. Çапла çурхи тулă гектартан вăтам шутпа 20 центнер тухнă.

Çак колхозра сÿс-кантăр бригади, бригадирĕ Краснова, паха йĕтĕн туса илнĕ. Бригадă 5 гектар çинчен 5000 çурăм йĕтĕн татса илнĕ. Йĕтĕн вăрри гектартан 5,8 центнер, йĕтĕн сÿсĕ 5 центнер тухнă.

Çавăн пекех „Тымар" колхозĕнче те йĕтĕнрен пысăк тупăш илнĕ. Йĕтĕне вăрман хăртса тунă çĕр çине акнă. Кашни гектар çине 1,5 цнетнер çилвинит, 1 центнер кали тăварĕ сапнă. 5 гектар çинчен 9865 çурăм йĕтĕн татса илнĕ. Кашни гектартан 7,6 центнер йĕтĕн вăрри, 7,88 центнер сÿсĕ тухнă.

Савка йалсоветне кĕрекен „Майăн 1-мĕш" колхозри иккĕмĕш бригадă бригадирĕ И. Матвейĕв вăрлăхлăх викăран пысăк тухăç илнĕ, гектартан 24 центнер викă вăрлăхĕ тухнă. „Правда" колхозри рекордлă тырпул звеновочĕ Карпов Игнатий вылăх кăшманĕнчен калама çук пысăк тупăш илнĕ. Кашни гектартан 968 центнер вылăх кăшманĕ туса илнĕ.

Кун пек лайăх тĕслĕхсем кăтартакан експонатсем татах та нумай. Халĕ колхозсенче районри выставкăра пулассишĕн хăйсен ĕçĕсене тĕплĕн пăхса експонатсем суйлаççĕ.

Д. Михайлов.

ХРОНИКĂ

Пĕтĕм Российăн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Чита облаçĕ тăрăх Пĕтĕм Российă Тĕпĕçтăвкомĕн организацилĕ комитетне тума йышăннă. Оргкомитет председателĕ А. В. Романов, членĕсем И. В. Муругов, Г. С. Хорхорин, М. С. Шуткелев тата А. М. Захаров йулташсем пулаççĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Округ № 364 Суйлав Комиссийĕ

ПĔЛТЕРНИ

Чăваш АСС Республикинчен ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар Округ № 364 Суйлав Комиççийĕн адресĕ çапла пулать:

Шупашкар хули, Розă Люксембург урамĕ (14—5) хресчен çурчĕ. Телефонсем: секретарĕн—1—99, председателĕн—0—89, Председател хватерĕ—1—02.

Ответлă редактăр **П. И. ИВАНОВ.**

Шупашкарти „Красный кустарь" аласталăх ертелĕ
вак-тĕвек çĕвĕ ĕçĕсене тума
маçтăрсене
тата ертелĕн вак-тĕвек çĕвĕ çĕлекен цехĕнче ĕçлеме ВĔРЕНМЕ çамрăксене ЙЫШĂНАТ.
Çак адреспе ыйтмалла: Заводская урамĕ, 8.
2—1.

Колхоз работникĕсен квалификацине ÿстерес тĕлĕшпе вĕренекен Чăваш шкулне
Библиотекăр кирлĕ.
Адрес: К. Маркс урамĕ, 22.

Чăвашсен Государствă Издательствине техническă редактăр КИРЛĔ.
Пичет çурчĕ, 4-мĕш хутлăх, 34 пÿлĕм.
3—3.

Радио пайне районсенче ĕçлеме
радиотехниксем тата радиомонтерсем
ВАСКАВЛĂ КИРЛĔ.
Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Сыхлану çурчĕ, 3-мĕш хутлăх, 38 пÿлĕм.
3—3.

„Чăваш Коммунĕ" çыранса илмели хакĕсем; 12 уйăха — 30 т., 6 уйăха — 15 т., 3 уйăха — 7 т. 50 пус 1 уйăха — 2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 805 Гор. Чебоксары, типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 1923. Тираж 11156. ф. 58 — 92 см. 1 — 1п. л.